24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ФЕВРАЛЬ
23
ТУНТИКУН
46(6071) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрлĕ Çар—халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ сывă пултăр!

Малалла, çĕнтерӳ патне!

Социализмлă çĕршывăн Хĕрлĕ Çарĕпе Хĕрлĕ Флочĕ 24 çул тултарчĕç. Çак хисеплĕ уява совет халăхĕ отечественнăй вăрçăн хаяр условийĕсенче ирттерет.

Сиве çурçĕрти Баренц тинĕсĕнчен пуçласа кăнтăрти Хура тинĕсе çитиех, икĕ пин çурă километр ытла тăсăлакан фронтра, сакăр уйăх ĕнтĕ халиччен тĕнче курман хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Çурçул ытла пыракан çапăçусенче Хĕрлĕ Çар тăшманăн полкĕсемпе дивизийĕсене сахал мар çапа-çапа салатрĕ. Юлашкинчен, тăван çĕршывăмăр чĕрине—Мускава тытса илме тăнă урнă бандăсене хытăн лӳчĕркесе, каялла ывăтса ячĕ.

Çапла, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, çирĕм тăватă çул тăрăшшĕнче нумай кĕрешӳсем витĕр пысăк çитĕнӳсем туса тухнăскер, паянхи отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хăйĕн ятне чаплă çĕнтерӳсен мухтавĕпе витет.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот фашистла Германи империализмĕн вăрçă машинине хирĕç паттăррăн çапăçни çине пĕтĕм тĕнче пăхса тăлăнет. Унăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе совет халăхĕ кăна мар, тĕнчери пĕтĕм прогрессивнăй этемлĕх, фашизм пусмăрлăхĕнче тăракан халăхсем пурте хавасланса савăнаççĕ, вĕсем Хĕрлĕ Çара ырлăх сунаççĕ, вăл çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвасса, тискер гитлеризма тĕппипех аркатасса кĕтеççĕ.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар вăл—ирĕклĕ ĕçхалăхĕн хĕçпăшаллă вăйĕ. Вăл, 24 çул каялла çамрăк совет влаçĕ умĕнче вилĕмле хăрушлăх тăнă вăхăтра çуралса, граждан вăрçи фрончĕсенче пиçĕхсе ӳснĕ. Вăл чăмăртаннă кунсенче чăн-тăн çар тума вăхăт та, условисем те çук пек туйăннă. Тăватă çул хушши пынă империализмлă вăрçăпа пĕтĕм çĕршыв юхăнса çитнĕ пулнă. Вăрçăпа тата выçлăхпа мĕнпур халăх ывăнса çитни курăннă. Ун чухне: «пирĕн çĕршывăн тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ ютçĕршыв интервенчĕсен аллинче тăнă, Украинăпа, Кавказа, Вăтам Азие, Урала, Çĕпĕре, Инçетри Хĕвелтухăçĕсе эпир вăхăтлăха çухатнă пулнă. Пирĕн союзниксем пулман, пирĕн Хĕрлĕ Çар та пулман,—эпир ăна тин рес туса йĕркелеме тытăннă,—пирĕн тырпул çитмен, хĕçпăшалсем çитмен, тумтирсем çитмен. Ун чухне пирĕн çĕршыв çине 14 государство тапăнса килнĕ. Анчах та эпир пуçа усса хуйхăрман, хăраса ӳкмен. Вăрçă вучĕ айĕнчех ун чух эпир Хĕрлĕ Çара организацилерĕ, хамăрăн çĕршыва çар лагерĕ туса хунă. Аслă Ленинăн хăвачĕ ун чухне пире интервентсене хирĕç вăрçăма хавхалантарса пынă» (Сталин).

Хĕрлĕ Çара Ленинпа Сталин хăйсем пăхса, хăйсем вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Вăл çарта, боецсенчен пуçласа аслă командирсене çитиччченех, ĕçхалăх ывăлĕсем тăнă. Çавăнпа та совет халăхĕ малтанхи вăхăтран пуçласах хăйĕн Хĕрлĕ Çарне юратнă, хисепленĕ, ăна яланах пулăшса тăнă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн хăй пуçланнă кунсенчех тытăнсах граждан вăрçин тĕрлĕ фрончĕсенче çапăçмалла пулнă. Вăл çапăçусенче ăна Ленинпа Сталин çĕнтерӳ çулĕсене кăтартса пынă. Аçта хăрушлăх палăрнă—Сталин юлташ çавăнта хăй пырса Хĕрлĕ Çар боецĕсене паттăрлатнă, çар командованине çирĕплетнĕ, çĕнтерӳ валли условисем туса панă. Вара Хĕрлĕ Çар тăшмана çĕнтернĕ.

В. И. Ленин вилнĕ хыççăн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флота куллен пăхса çитĕнтерес ĕçе Сталин юлташ хăй туса тăрать. Пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн 24 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсем пĕтĕмпех аслă Сталин ячĕпе тачăн çыхăнса тăраççĕ. Çĕршыва сталинла пятилеткăсем тăрăх реконструкцилесе шултра индустрие ӳстернĕ майпа пирĕн çар промышленноçĕ те çитĕнчĕ. Çакна пула Хĕрлĕ Çар та вăтçăн çĕнĕ техникăпе хĕçпăшалланса, тĕнчери чи хăватлă çарсенчен пĕри пулса тăчĕ. Вăл хамăр çĕршыври заводсенче тăвакан чи лайăх самолетсемпе, танксемпе, орудисемпе тата ытти хĕçпăшал таврашĕпе пуянланчĕ. Çакна тума пулсан, хальхи отечественнăй вăрçăра гитлерла Германин вăрçă машинине хирĕç кĕрешме те май килмен пулĕччĕ. Халĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар Гитлер самолечĕсене хирĕç самолетсем, танксене хирĕç танксем, орудие хирĕç орудии, миномета хирĕç миномет кăларса тăрать. Çавăнпа пĕрлех тата пирĕн геройла çапăçакан Хĕрлĕ Çар боецĕсен, граждан вăрçи вăхăтĕнчи пекех, чи вăйлă хĕçпăшал—советла патриотизм туйăмĕ пур. Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăйсен тăван çĕршывне тата хăйсене ертсе пыракан аслă çулпуçа Сталин юлташа чĕререн юратаççĕ. Çак юрату çулăмĕпе вĕсем, алри хĕçпăшала çирĕппĕн тытса, тăшманăн хирек мĕнле вăйĕсем çине те хăюллăн пырса тапăнаççĕ, çак патриотизмпах нимĕнле хăрушлăхран та хăрамасăр çĕнтерӳрен çĕнтерӳ патне—малалла ыткăнаççĕ. Пирĕн боецсем—летчиксем, танкистсем, пехотинецсем, артиллеристсем тата ыттисем те—пĕчченшерĕн темиçе тăшмана пĕтерсе тăкса тĕлĕнмелле ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем хăйсене шеллемесĕр çапăçса Хĕрлĕ Çар ятне те, тăван çĕршыв ятне те мухтавлăхпа витеççĕ. Совет Союзĕн геройĕсен ĕçĕсемпе ячĕсем пĕтĕм тĕнчене сарăлаççĕ. Вĕсен ячĕсем совет халăхĕн историне кĕрсе ĕмĕрлĕхе юлаççĕ.

Çулăмланса тăракан патриотизм паянхи кун пирĕн тылри халăх хушшинче те вăйлăн курăнать. Совет халăхĕ, ирсĕр фашистсен урнă полкĕсене аркатса вĕсене тăван çĕршывран хăвăртрах шăлса ывăтас тесе, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлĕ, пурне те вăхăтра парса тăрассишĕн пĕтĕм вăйне, мĕнпур пултарулăхне хурать.

Тăшман çапах та вăйлă-ха. Этемлĕхĕн тискер тăшманĕ — Гитлер çуркунне çĕнĕрен наступлени пуçласа яма хапсăнать. Анчах та пирĕн чаплă Хĕрлĕ Çар унăн планĕсене аркатĕ. Çакна тăвас тесен, пирĕн пĕтĕм тылăн, мĕнпур совет халăхĕн татах та нумай ĕçлемелле. Пурин те фронтшăн ĕçлемелле, пурне те фронта памалла. Фронт валли ĕçлессинче вăхăта та шутламалла мар, вăя та хĕрхенмелле мар. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун пирĕн кашнинех çакăн пек ĕçлеме сăмах памалла.

Паянхи отечественнăй вăрçăра пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара халиччен пекех аслă Сталин юлташ ертсе пырать. Аслă çулпуç Сталин ертсе пынипе пирĕн Хĕрлĕ Çар яланах çĕнтернĕ, халĕ те çĕнтерĕ.

Хĕрлĕ Çар—халăхсен тăванлăхĕпе туслăхĕн çарĕ сывă пултăр!

Ленин—Сталин ялавĕпе, çĕнтерӳ патне, малалла!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç вăйлăн çапăçса, малалла кусна тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 20-мĕшĕнчи çапăçусенче нимĕçсен 14 самолетне персе антарнă тата противникăн аэродромĕсем çинче 11 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсенне 25 самолет пĕтернĕ. Пирĕн 3 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 21-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă.

* * *

Февралĕн 20-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 14 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 475 автомашинине, боеприпассемпе войскăсем турттарса пыракан 165 лавне, горючи тултарнă 5 автоцистернине, 22 орудине, зенитнăй пулеметсен 33 точкине, 9 пулеметне, 8 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне тата горючи хунă тепĕр склада взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 5 вагона, 2 паровоза çапса çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 4 батальона çити салалса янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белобородов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшман пехотин полкĕ 6 танк пулăшнипе тунă контратакăна ăнăçлăн сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çынна яхăн вилсе юлнă. Тепĕр участокра Кузнецов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри артиллеристсем февралĕн 20-мĕшĕнче нимĕçсен горючи складне сирпĕнтерсе янă, минометсен батарейине, çар грузĕсем тиенĕ 5 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 2 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Козлов тата Ломоносов юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисенчи боецсем (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ), тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран хăваласа кăларнă. Нимĕçсем, хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тавăрас тесе, танксемпе контратака тума хăтланнă. Тăшманăн контратакине совет артиллерийĕ хăватлă вут-çулăмпа сирсе пăрахнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çынна çити вилсе пĕтнĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç хаярран çапăçса, тăшманăнне 6 пулемет, 1000 çити граната тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 80 çынна яхăн пĕтнĕ.

* * *

Орел облаçĕн территорийĕнче кĕрешекен Д. юлташăн партизанла отрячĕнчи боецсем юлашки кунсенче нимĕçсене чугунçул çинчи боеприпассем тиенĕ икĕ эшелона взрыв туса сирпĕнтернĕ, П. станци çывăхĕнчи чугунçулăн пысăк кĕперне пĕтерсе тăкнă. Çав кĕпере нимĕçсем нумаях пулмасть юсанă пулнă.

* * *

Нимĕçсен 481-мĕш пехотнăй полкĕн командирĕ патне «2-мĕш батальонри лару-тăру çинчен ятарласа çырнă донесение» пирĕн чаçсем тытса илнĕ. Çав донесенире батальон командирĕ, подразделенин çапăçури пултарулăхне çĕклес тесен, çаксене тумалла тенĕ: «.. чи малтанах подразделение стрелоксем хушса памалла, мĕншĕн тесен ротăсем стрелоксемсĕр юлас хăрушлăх умĕнче тăраççĕ.., чи çивчĕ те татăклă ытти командирсем пирки тăрать. Взвод командирĕсем пулма çирĕп шухăш-кăмăллă офицерсене лартмалла. Кунта пуринчен ытларах вĕсен опычĕ мар, вĕсен нервĕсем çирĕп пулни паха». Юлашкинчен батальон командирĕ çакна палăртать: «Вăрçă питĕ вăраха кайнă пирки тата унăн вĕçĕ-хĕрри курăнман пирки чаçри шухăш-кăмăлсем питех те япăх. Салтаксен хальхи шухăш-кăмăлĕ, ман шутпа, 1917—1918 çулсенчи Германи çарĕнчи салтаксен шухăш-кăмăлĕпе пĕр пекрех».

Çапла вара, гитлерла батальона стрелоксемсĕр пуçне, çирĕп нервлă офицерсемсĕр пуçне, обмундированипе продовольствисĕр пуçне, çапăçури хастарлăхпа хавхалану çитмест, вăрçас кăмăл çитмест.

* * *

Чехословаки патриочĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешеççĕ. Çак кунсенче Брнори заводсенчен пĕринче (Чехословакия), Германи çарĕ валли хĕçпăшал туса кăларакан-скерĕнче, çĕрле заводăн электростанцине пăснă, çавна пула заводăн мĕнпур цехĕсем 14 сехет хушши ĕçлемесĕр тăнă. Тепĕр кунне çав заводрах пулеметсем пухакан цехра вăйлă взрыв пулнă. Цехăн мĕнпур оборудованийĕ юрăхсăра тухнă. Брно хули çывăхĕнче çар пурлăхĕсемпе танксем турттарса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă.

* * *

Бакури «Молотовнефть» трестăн 4-мĕш №-лĕ промыслинчи çамрăксен бригади, пĕр канмалли кунпа усă курса, халиччен нумай вăхăт хушши ĕçсĕр тăнă скважинăна юсаса ĕçе янă. Юсанă хыççăн скважина талăкне 6-шар тонна çăмăл нефть парать.

Февралĕн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 22-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн стрелковăй часть противникăн С. ялĕ çине тунă контратакине сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсен 200 вилли выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противник хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан 2 пункта тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем нимĕçсен 10 танкне пĕтерсе тăкнă, противникăнне 7 оруди, 10 миномет тата 16 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Немцевич юлташ командир пулса ертсе пыракан авиаци чаçĕ, Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, 5 кун хушшинчи çапăçусенче чугунçул вокзалне аркатса тăкнă, нимĕçсен 9 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 180 автомашинине, 7 бронемашинине, 180 лавне, зенитнăй пулеметсен 7 точкине, 4 бензоцистернине тата 2 радиостанцине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ. Летчиксем противникăн тĕрлĕ калибрлă 80 орудине, 140 минометне, 50 пулеметне пусарса лартнă тата сиенленĕ, противник пехотин 2 полкне çапса аркатса сапаласа янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Васильев лейтенант нимĕçсен истребительне хăйĕн самолечĕпе пырса çапăннă та хамăрăн аэродром çине тĕрĕс-тĕкелех анса ларнă.

* * *

Партизансен Лазо ячĕпе тăракан отрячĕ, Смоленск облаçĕнче кĕрешекенскер, пĕр яла çĕмĕрсе [illegible]. Ку ялта 11 нимĕç хăйсен чаçĕ [illegible] хваттерсем хатĕрленĕ пулнă. Партизансем хваттер хатĕрлекен нимĕçсене вĕлерсе пĕтернĕ те ял патĕнче засадăна пытанса ларнă. Часах çул çинче нимĕçсен пехотине турттарса пыракан 2 грузовой автомашина курăнса кайнă. Партизансем, автоматсенчен персе тата гранатăсем пăрахса, машинăсене сирпĕнтерсе янă, 44 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 131-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 431-мĕш полкĕн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Иозеф Вальте çапла каласа панă: «1942 çулти январĕн 15-мĕшчен эпĕ Майнцри Герсте заводĕнче ĕçлерĕм. Мана çара каясран отсрочка панăччĕ. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсен çарĕ питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ пирки Германире çар промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисене те çара массăллăн мобилизацилеççĕ. Пĕр уйăх каярах Герсте заводĕнчен 100 çынна çара мобилизацилерĕç. Эпĕ те вĕсен хисеппех кĕтĕм. Вăрçă ĕçне эпĕ пачах та вĕренмен. Мана хам пекех вĕренмен салтаксен ушкăнĕпе пĕрле Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ячĕç. Эпĕ хамăн ротăна пырса чухне унта пĕтĕмпе те 4 салтак, 2 унтер-офицер, пĕр фельдфебель тата рота командирĕ лейтенант Вернике çеç пурччĕ. Эпир пырсан, рота 19 çынна çити ӳсрĕ. Пĕрремĕш атакăрах вырăссем пирĕн 9 çынна стройран кăларчĕç. Пирĕнпе юнашар кĕрешнĕ 8-мĕш ротăра та положени пирĕннинчен лайăххах мар. Вара эпĕ пире вилĕм çеç кĕтсе тăнине ăнланса илтĕм те тепĕр кунне тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕçсен 267-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 497-мĕш полкăн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Фред Готе çапла каласа панă: «Тыткăна эпĕ çакăн пек лару-тăру вăхăтĕнче лекрĕм: эпир йышăннă яла вырăссем хупăрласа илнĕччĕ. Вăл вăхăтра эпĕ тепĕр 7 салтакпа пĕрле пӳртре ларттăм. Эпĕ хамăн юлташсене пăшалсене хума сĕнтĕм. Вара эпир алăсене çĕклесе çуртран тухса тыткăна парăнтămăр. 497-мĕш полкра офицерсем юлманпа пĕрех. Пирĕн батальонăн командирĕ лейтенантчĕ. Полка çĕнĕрен хушса паракан салтаксем хушшинче 30 процента яхăн çар службине юрăхсăр çынсем».

* * *

Орел облаçĕнчи Орловка ялĕнчен чакса тухса кайнă чухне нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем хĕрарăмсене, ача-пăчасемпе стариксене 49 çынна хăваласа пухнă та вĕсене пĕр çурта хупса лартнă. Унтан çурт чӳречинчен пĕр çыхă граната пăрахса çуртне вут тивертсе янă. Çак çынсенчен 6-шĕ çеç çăлăнса тухнă. Ыттисем чĕрĕллех çунса кайнă.

* * *

Уралти Н-ски заводра ĕçлекен фрезеровщик Д. Ф. Босой юлташ сменăри нормăна 1.480 процент тултарнă. Тепĕр кунне вăл задание 1.438 процент тултарнă. Тăватă ĕç кунĕ хушшинче стахановец икĕ уйăхри задание тултарнă.

ТАСС опроверженийĕ

Японири «Ници-ници» хаçат çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: Сингапур парăннă майпа Японин император ставкине кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнче саламланă ютçĕршыв представителĕсен шутĕнче «совет посольствин темĕнле представителĕ» пулнă иккен, анчах çав «представителĕн» хушаматне хаçат кăтартмасăрах иртсе кайма тăрăшнă. Ăнлантарса пама та кирлех мар пулĕ, сăмах кунта çӳлте асăннă хаçатăн провокациллĕ элекĕ çинчен пырать, Япони ставкинче совет посольствин нимĕнле представителĕ те пулма пултарайман, çавăнпа та, паллах, Хĕвелтухăçĕнчи нимĕнле вăрçă ĕçĕсем тĕлĕшпе те Япони командованине саламлама пултарайман. Пурте пĕлеççĕ, Лăпкă океан çинчи вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех Японире çавăн пек элеке сарнăччĕ, анчах ăна 1941 çулти декабрĕн 14-мĕшĕнче ТАСС агентстви сирсе янăччĕ. Çав элекех тепĕр хут туртса кăларни уççăнах курăнса тăракан провокациллĕ суя хыпарçсен авторĕн ăс-пуçĕ начар ĕçленине кăтартса парать.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулнă чаплă лару

Ĕнер, февралĕн 22-мĕшĕнче, 8 сехетре каçхине Шупашкар хулинчи тата Шупашкар гарнизонĕнчи парти, совет тата обществăллă организацисен Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пухăннă чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Лару президиумĕнче—ВКП(б) обкомĕн тата Шупашкар хула комитечĕн секретарĕсем, ЧАССР правительствин членĕсем.

Пысăк хавасланăхпа, тăвăллăн алă çупса чаплă лару ВКП(б) Центральный Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне хисеплĕ президиума суйларĕ.

Чаплă ларура старши батальоннăй комиссар Меламедов юлташ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарни çинчен тата нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче ĕççыннисем енчен Хĕрлĕ Çара пулăшса пырас, тыла тĕреклетес ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пымалли çинчен каларĕ... — чĕнчĕ.

Чаплă лару, тăвăллăн алă çупса тата Сталин юлташа саламласа «урра» кăшкăрса, Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕ.

Чаплă лару хыççăн красноармеецсен ансамблĕ концерт лартса пачĕ. Ларура пулнă çынсене концерт кăмăла кайрĕ.

Квартал планне тултарнă

Çĕрпӳ районĕнчи финанс работникĕсем 1941 çулти укçа-тенкĕ пухас плана ăнăçлăн пурнăçларĕç. Вĕсем хăйсем çине кăçалхи пĕрремĕш квартал планне Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун тĕлне пурнăçлама обязательство илнĕччĕ. Финанс работникĕсем илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Вĕсем, куллен график тăрăх çирĕппĕн ĕçлесе пырса, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Пĕрремĕш Вăрмангкас ялсовечĕн налог агенчĕ Иванова, Тĕнсĕр, Хыркасси, Анатри Кипекри, Лапра-Кушка тата ытти ялсовечĕсенчи налог агенчĕсем те пĕрремĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана ытлашшипех тултарчĕç.

Г. ПЕТРОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Боецсен хăюллă та хастарлă ĕçĕсем

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧЕ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Фронтăн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем, кĕрешĕве малалла вăйлатса пырса, тăшманăн техникипе чĕрĕ вăйне пысăк çухатусем кӳнĕ. Противник темиçе хутчен те контратака тума хăтланнă, çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе пынă, анчах çапах та пирĕн боецсен наступленине тытса чарма пултарайман. Тăшманăн контратакисене пурне те сирсе пăрахнă.

Черпышев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боец-гвардеецсен чаçĕ халăх пурăнакан икĕ пунктпăн пынă хаяр çапăçусенче 600 фашиста яхăн вĕлерсе пĕтернĕ. Кунсăр пуçне, 300 нимĕçе яхăн амантнă. Çак çапăçусенче фашистсен 6 танкне, миномет батарейине, орудине расчечĕ-мĕнĕпех, 22 пулеметне, боеприпассен складне, çар пурлăхĕсем турттарса пыракан 84 лавне, боеприпассем турттарса пыракан 2 грузовой машинине, горючи складне пĕтерсе тăкнă, противникăн огневой точкисене 20 ытла пусарса лартнă.

Артиллеристсем тăшман çине таттисыр снарядсем персе тăраççĕ. Серко юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенин боецĕсем пĕр кун хушшинче кăна 150 фашиста ытла пĕтерсе тăкнă. Травкин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри артиллеристсем тĕл тивертнĕ темиçе снарядпа тăшман миномечĕсен батарейине, сынсемпе çар пурлăхĕсем турттарса пыракан 15 лавĕпе 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Артиллеристсем тĕл персе тăшманăн çул тăрăх пыракан автоколоннине саланса янă.

Çапăçури хăюлăхăн тĕслĕхĕсем кунран кун нумайланса пыраççĕ. Тихонов юлташ ертсе пыракан разведчиксен 5 çынран тăракан групп çапăçура пысăк хăюлăхпа хастарлăх кăтартнă. Вĕсем 20 фашиста хăйсен çывăххĕнех янă та вĕсем çине питĕ вăйлăн пеме пуçланă. Боецсем, хăюллăн та паттăррăн çапăçса, 12 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Унтан Тихонов юлташ танк патĕнче противникăн офицерĕ тăнине курнă та тĕл персе ăна пĕтерсе тăкнă.

Красноармеец-разведчик Зуев юлташ хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса панă. Пирĕн наблюдательнăй пункт патне фашистсен ушкăнĕ пуса пынă. Паттăр боец çухалса кайман, вăл граната пăрахса пĕр фашиста вĕлернĕ, 5-шне амантнă, ыттисем тарса саланса пĕтнĕ.

Санитарка Нина

Вăрçăччен вăл учительсем хатĕрлекен институтра вĕреннĕ. Тăшман пирĕн çĕршыв çине разбойникла тапăнсанах, Нина та тантăш-юлташĕсемпе пĕрле фронта санитарка пулса ĕçлеме килнĕ. Хăюллă санитаркăна боецсемпе командирсем юратаççĕ, хисеплеççĕ. Нумаях пулмасть фронтăн пĕр участокĕнче пульăсем айĕнчех Нина çапăçу хирĕнчен аманнă 18 боеца илсе тухса, пулăшу пунктне леçнĕ. Кун пекки Нинăн пĕрре кăна пулман.

Пĕр çапăçура йывăр аманнă политрука пулăшу пама васкакан санитарка енне нимĕçсем вĕçĕ-хĕррисĕр пеме пуçланă. Совет патриотки хăраса ӳкмен. Вăл часах хăй çумĕнчи автоматĕнчен пеме пуçланă. Нимĕç салтакĕсем пĕрин хыççăн тепри çĕрелле тăшĕрĕлсе аннă. Нина çаплах пенĕ. Унччен те пулман, хăюллă санитаркăна хăтарма пирĕн боецсем васкаса чупнă. Анчах Нинăна тăшман пульли йывăр амантнă.

Хăюллă ĕçсемшĕн Командовани Нинăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Лейтенант С. ЕГОРОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Çапăçура ӳссе çитĕннĕ çынсем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Д. ялне нимĕçсем хирĕç тăмалли вăйлăн çирĕплетнĕ вырăн туса хунă. Противникăн çак яла хӳтĕлекен гарнизонĕ суйласа илнĕ эсэсовецсенчен тăнă. Тул çуталас умĕн пирĕн боецсем фашистсен крепоçне штурмлама тытăннă. Стрелоксем сулахай флангран асăрханулăн çывхарса пынă, йĕлтĕрçĕсем—сылтăм флангран çапма хатĕрленнĕ. Красноармеецсем пынине асăрхаса илсен, нимĕçсем пулеметсемпе автоматсенчен, минометсенчен тăвăллăн пеме пуçланă. Вĕсене хирĕç пирĕн боецсем çавăн пекех тăвăллă вут-çулăмпах ответленĕ. Сывлăшра снарядсемпе минăсем çуралнă сассисем, пулеметсемпе автоматсенчен шăлăртаттарни, винтовкăсенчен пени кĕрлесе тăнă.

Тăшман укреплениĕсем патне çитесси 100 метра яхăн юлсан, совет воинĕсем ура çине сиксе тăнă та атакăна ыткăннă. Паттăррăн пырса çапса, вĕсем нимĕçсене оборонăн малти линийĕнчен хăваласа кăларнă. Лешсем каярахри блиндажсенче çирĕпленсе ларма васканă. Сылтăм флангран, ял тавра кайса, пирĕн пехотинецсемпе пĕрле танксем пынă. Вĕсем, фашистсен танкĕсене хĕссе, малаллах куçнă. Тăшман танкĕсем тарма тытăннă. Совет танкисчĕсем çавтери хăюллăн çапăçнă. Нимĕçсем пирĕн пĕр машинăна вут тивертсе янă пулнă, анчах та çулăм хыпса илнĕ танк экипажĕ тăшман çине снарядсем вăркăнтарма, пулеметсенчен пеме чарăнман. Çав вăхăтрах пирĕн пехотинецсем те тăшман пехотине вăйлăнрах та вăйлăнрах хĕсме тытăннă.

Эсэсовецсем хаяррăн хирĕç тăнă, анчах пирĕн паттăрсем пырса çапнине тӳсе тăрайман, каялла ыткăннă. Ялти мĕнпур урамсемпе ял патнелле пымалли вырăнсем тăшманăн виллисемпе витĕнсе юлнă.

Çак çĕнтерĕве пирĕн боецсем хăйсен пысăк пуçарулăхне, вăрçăри чеелĕхĕпе паттăрлăхне пула тума пултарнă. Çапăçăва кĕрес умĕн малтанхи кун кăна красноармеецсенчен уйăрса лартнă рота командирĕ Ревков, политрук Гончаров тата ытти нумай юлташсем геройла çапăçнă. Вĕсем çапăçăвăн чи ответлă та хăрушă участокĕсенче пынă.

Повнелов комсомолец командирăн обязанноçĕсене туса пыма тин кăна тытăннă-ха, çапах та вăл малтанхи çапăçусенчех çапăçăва мĕнле ертсе пымаллине тата тăшмана мĕнле аркатмаллине кăтартса панă. Çапăçăвăн малтанхи кунĕнчех çамрăк командирăн батарейи противник миномечĕсен 3 батарейине тата пĕр ДЗОТ-не çапса аркатнă. Тепĕр кунне Повнелов юлташ, хăйĕн орудийĕсенчен персе, фашистсен танкне çĕмĕрнĕ тата пулеметсен темиçе точкине пусарса лартнă.

Танкăн механик-водителĕ орденоносец Литовченко юлташ тĕлĕнмелле хастарлăхпа çапăçать. Ун машинин экипажĕ противникăн огневой точкисене пусарса лартма задани илнĕ пулнă. Литовченко юлташ, тăшмана çиçĕм пек атакăласа, минометсен 12 точкине тата пулеметсен 22 точкине пусарса лартнă, фашистсенне 3 тупă, 15 блиндажа çити пĕтерсе тăкнă, пулеметран персе тата хăйĕн йывăр машинин гусеницисемпе таптаса, 70 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Анчах тăшман снарячĕ танкăн бронине çĕмĕрсе кĕнĕ. Машина командирĕ Горобец вилет. Башенăй стрелок Капелюшинпа Пастушин радист аманаççĕ. Танка çулăм ярса илет. Литовченко хăйĕн аманнă юлташĕсемпе машинăна мĕнле пулсассăн та çăлса хăварма шут тытать. Вăл мĕнпур вăй çитнĕ таран газ парать те çунакан танкпа фашистсен ушкăнĕнчен çĕмĕрсе тухать. Машина çавтери хытă кайнипе ун çинчен çулăм сирĕлет. Çапла Литовченко, хăйĕн танкне çапăçуран ăнăçлăн илсе тухса, аманнă юлташĕсене пулăшу парать.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Пирĕн боецсем тăшмана ДЗОТ-семпе блиндажсенчен хĕссе кăлараççĕ

ЛЕНИНГРАД ФРОНЧЕ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Юлашки çапăçусенче пирĕн фронтăн участокĕсенчен пĕринче Быков командирăн подразделенийĕ чапа тухнă. Çак подразделенин боецĕсемпе командирĕсем ДЗОТ-сене тытăнса ларнă фашистсене гранатăсемпе тата штыксемпе çапа-çапа кăлараççĕ.

Кĕçĕн командир Гатафутдинов хăйĕн отделенине çапăçăва хăюллăн илсе кайнă. Нимĕçсен ДЗОТ-не вăл хăй чи малтан çĕмĕрсе кĕнĕ те икĕ фашиста пĕтерсе тăкнă. Отделени командирĕ Резеневич пилĕк нимĕçе вĕлернĕ, фашистсен блиндажĕнче радиостанци, икĕ велосипед тытса илнĕ. Тепĕр блиндажра лейтенант Новиков пилĕк нимĕçе пĕтерсе тăкнă, икĕ ручной пулемет, тăватă автомат тытса илнĕ. Назаренкăпа Журавель политруксем ертсе пыракан боецсем кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, нимĕçсен икĕ ДЗОТ-не тытса илнĕ.

Фронтăн юнашар участокĕнче кĕрешекен подразделенире вăрçăри хăюлăха рота командирĕ Богданов, политрук заместителĕ Липатов кăтартнă. Хăйсем хыççăн боецсене ертсе кайса, вĕсем чугунçул çине чи малтан хăпарнă та шпалсене тытăнса ларнă нимĕçсене гранатăсемпе çапа-çапа кăларнă. Тăшмана çакăнтан çапса кăларса, вĕсем пирĕн пехотăна малалла кайма çул уçса панă. Тăшман чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те чылай пысăк çухатусем тӳсет. Фронтăн çак участокĕнче виçĕ кун хушшинче 760 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсенне 19 ДЗОТ тата блиндаж тытса илнĕ, 14 ДЗОТ-па блиндажа пирĕн артиллери пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем: 49 пулемет, вăл шутра шултра калибрлă пĕр пулемет, 26 автомат, 129 винтовка, 146 пин винтовка патронĕ, 3 раци тата ытти çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ.

А. ВИНОГРАДОВ.

Йăлтах вăрçă валли, йăлтах çĕнтерӳ тунă çĕре

М. И. КАЛИНИН

Фашистла Германие хирĕç сакăр уйăх хушши вăрçă пырать ĕнтĕ. Вăрçăн хаярлăхĕ, çапăçусем вăрăма пыни, юн нумай тăкăнни енчен илсен,—тĕнче куналлакал вăрçа халиччен курман-ха. Курма та пултараймăн; хальхи вăрçа икĕ миллиард çынна яхăн, урăхла каласан, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур халăх тенĕ пекех хутшăннă ĕнтĕ.

Чи хаяр та юн нумай тăктаракан çапăçусем, боецсемпе техника чи нумай хутшăннă çапăçусем пирĕн çĕршывăн территорийĕ çинче пулса пыраççĕ. Совет халăхĕ çине чи çĕнĕ çар техникипе хĕçпăшалланнă, тĕнчери чи пысăк çар, юнпăн чи хытă çăткăнланакан сĕмсĕр çар килсе тапăнчĕ. Фашистсен çак йыткĕтĕвĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çар вĕçĕ-хĕррисĕр паттăрлăхпа кĕрешсе, вĕсене питĕ хăватлăн пыра-пыра çапать.

Пирĕн правительство та, халăх та вăрçа пуçласа ярасшăн пулман. Çакă вăл мĕншĕн çапла пулни паллă ĕнтĕ, мĕншĕн тесен пирĕн халăхăн хăйĕн вăй-хăвачĕпе пухса тунă материальнăй тата духовнăй пуянлăхĕсем пирĕн çĕршывра халăхăн сарлака массисен харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Çак вăрçа пире гитлерла Германи туртса кĕртрĕ. Пур совет çыннисене те—фронт çывăхĕнче пурăнаканнисене те, фронтран инçетри тылра пурăнаканнисене те—вăрçă йывăрлăхне ăнлантарса парасси, Германи фашизмĕ совет халăхĕн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне хăратса тăнине ăнлантарса парасси, тăшмана аркатса тăкас задачăна пĕтĕм пурнăçа пăхăнтармаллине ăнлантарса парасси кирлĕ пулса тухрĕ.

Хаяр çапăçусен уйхирĕ пулса тăнă тата гитлеровецсем халăх юнне тăкса хуçаланнă пирĕн хĕвеланăç енчи облаçсенчи халăхсем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Германи фашизмĕ совет халăхне хирĕç туса пыракан вăрçă вăл—вăрă-хурахла вăрçă пулса тăнине курчĕç. Вăрçă мирлĕ халăха, тинĕсри вăйлă хум евĕрлех, пырса çапрĕ; фашистсем килсе тапăнни тинĕс шывĕ пекех йӳçĕ пулнине кашни çын тутанса, тӳссе лăхрĕ.

Пирĕн çĕршыв питĕ анлă. Çынсем фронтран мĕн чухлĕ аякках тăраççĕ, вăрçă йывăрлăхĕсем вĕсене çавăн чухлĕ сахалтарах пырса çапаççĕ. Час-часах çав йывăрлăхсем пурнăçра йăлари кăлтăксемпе чăрмавсенче çеç палăраççĕ: фронт çывăхĕнчен çынсем чылай куçса пыраççĕ, халăх нумайланса каять, апат-çимĕçре çитменлĕхсем пулаççĕ, пасарсенче таварсем хаклашаççĕ т. ыт. те. Анчах та çакăн пек йывăрлăхсем, фронтра пирĕн воинсем тӳсекен тата нимĕçсен тискер кайăкĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ облаçсенчи халăхсем тӳсекен чăн-чăн йывăрлăхсемпе танлаштарсан, нимĕнех те мар. Тылра ĕçлесе пурăнакан çынсем хăйсем çинче вăрçăн питĕ хăрушă йывăрлăхĕн пĕчĕкрех пайне çеç туйса тăраççĕ,—ака мĕне тĕплĕнрех ăнланса, тавçăрса илмелле. Калăпăр, апшĕ фронтра, ывăлĕ тылра ĕçлет е урăхла: апшĕ тылра ĕçлет, ывăлĕ Хĕрлĕ Çар ретĕнче çапăçать. Вĕсенчен хăшне йывăртарах? Паллах, фронтовика йывăртараххине кашниех ăнланать.

Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем нимĕнле йывăрлăхсемпе çитменлĕхсенчен те хăраса тăмаççĕ. Вĕсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр çапăçаççĕ, вĕсем тăван çĕршывшăн кирек хăш самантра та хăйсен мĕнпур вăйне, тата та хăйсемшĕн чи хаклине—хăйсен пурнăçне пама хатĕр. Совет çыннисен—арçынсемпе хĕрарăмсен — тылра, хуласемпе ялсенче çавăн пек ĕçлемелле те ĕнтĕ.

Паллах, вăрçăра, çапăçу хирĕнче çынсем хăвăртрах пиçĕхсе тĕрекленеççĕ, чи çавăрнăçусăр çынсем те фашистсемшĕн хăрушă та хаяр çынсем пулса тăраççĕ. Вас. Гроссманăн «Старик» ятлă калавĕнче халăх геройлăхĕн, тăшмана халăхшăн тавăрнин питĕ лайăх тĕслĕхне сăнласа панă. Ку калава «Красная Звезда» хаçатра 1942 çулти февралĕн 8-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă.

«—Хаяр çын эсĕ, — тенĕ Семен Михеич хăйĕн тусне партизана, колхоз председательне,—ака пирĕн йăхра никам та юн тăкман. Анне чăх пусма хăратчĕ, чăх пусма та кӳршĕ арăмне чĕнетчĕ.

— Асту, мучи, — тавăрнă ăна хирĕç колхоз председателĕ, — нимĕçсемшĕн ытла ырах ан пул, уншăн халăх умĕнче ответ тытăн».

Ялта нимĕçсем тискерленни ĕçе çакăн пек вĕçленесси патне илсе çитернĕ: нимĕçсен автоматчикĕ аманнă красноармееца тата ăна пулăшу паракан хĕрарăма персе пăрахнă.

Семен Михеич хăй аллине йывăр чукмар мĕнле пырса лекнине хăй те асăрхаман. Унăн çак самантри пек туйăм-сисĕм нихăçан та пулман. Хаяр та хĕрӳллĕ çилĕ, юлашки уйăхсем хушшинче пуç тайса пурăннинчен тасатакан çилĕ, хăйне кӳрентернĕшĕн, ытти çынсене кӳрентернĕшĕн тарăхни пиншер старикĕсенчен, ача-пăчасенчен, хĕрачасенчен, хĕрарăмсенчен мăшкăлланăшăн тарăхни, тăшман таптаса вараланă çĕршывшăн çиленни ăна çулăм пек ярса илнĕ. Вăл чукмара çӳле çĕкленĕ те нимĕç çинелле утса кайнă. Вăл, çӳллĕ те кĕрнеклĕ старик — юр пек шурă кăтра çӳçлĕ утарçă — отечественнăй аслă вăрçăн мухтавлă та чĕрĕ сăнарĕ, хаяррăн утса пынă.

— Хальт!—тесе кăшкăрса, нимĕç ун çине автоматпа тĕлленĕ.

Анчах старик хăйĕн чукмарĕпе нимĕçе çавтери вăйлăн çавăрса çапнă».

Нимĕçсемпе тĕл пулма тӳрĕ килнĕ вырăнсенче пур çĕрте те халăх вăрçă законĕсене вĕренсе, хăнăхса пырать. Çак кăтартуллă уроксем пурăнма вĕрентеççĕ. Анчах та халăх çĕршывăн, унăн малашлăхĕшĕн мĕн тума кирлине пурне те тума тивĕçлĕ пулса тăнине, мĕнпур ĕçе çĕнтерӳ валли туса пыма кирлине ăнланса илмен пулсан, ĕç татах та хурлăхларах пулнă пулĕччĕ.

Вăрçă пирĕн çĕршывăн анлă территорине çавăрса илнĕ. Миллионшар çынсем хăйсем хăнăхнă вырăнтан тапранчĕç те хĕвелтухăç еннелле куçса кайрĕç. Тепĕр чухне тăшманăн самолечĕсем фронтран чылай шала вĕçсе кĕреççĕ те хуласемпе ялсем çине бомбăсем пăрахса, халăх тăшмана курайманнине татах та ытларах вăйлатаççĕ. Анчах çапах та вăрçă, унăн требованийĕсем, халăхăн çĕнтерӳшĕн тума тивнĕ жертвăсем пĕр çакăнпа çеç мар палăрса тăмалла, нацин тĕлĕшĕнчен никама пăхăнманлăха хăратса тăракан хăрушлăхсене Совет Союзĕнчи халăхсем пурте тарăнăн ăнланса илнипе палăрса тăмалла. Пурте çĕнтерӳ, хăвăртрах çĕнтерӳ тума ĕмĕтленеççĕ. Эпĕ çапла шухăшлатăп: халăхăн ытларахĕш пайĕ çĕнтерӳшĕн пыракан çапăçăва чун-чĕререн активлăн хутшăнасшăн, çĕнтерĕве хĕрешсе илме пулăшасшăн тăрăшать.

Тăшмана çĕнтерес тесен, практикăра мĕнле майпа усăллăрах вăй хурса ĕçлес ыйту тăрать. Ман шутăмпа, чи малтанах, кашни çыннăн çĕнтерĕве фронтра çеç мар, инçетри тылра та тунтаса хатĕрлесе пыма кирлине ăнланса илмелле. Вăрçăра ăнăçусем тăвас ĕçе çапăçу хирĕнчи боецсем тăшмана хĕçпăшалпа пĕтерсе пырса çеç мар, килхуçи хĕрарăмĕсем те—производствăра фронта кайнисем вырăнне йышăнса, электроэнергине, топливăна перекетлĕн тыткаласа, аманнă боецсемшĕн, тăлăх ача-пăчасемшĕн тăрăшса—хутшăнаççĕ.

Вăрçă темĕн тĕрлĕ средствăсене те питĕ нумай ыйтать, вĕсене ытларах та ытларах туса кăлармалла. Фронта мĕн кирлине парас тесен, тылра пиçиххисене хытăрах туртса, çыхмалла, тăкаксене пĕчĕклетмелле. Çакă çиелтен пăхсан питех те ансат пек ăнланусене час-часах нумайĕшĕсем йывăррăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çапла ĕнтĕ, çĕнтерӳ тумашкăн кам чăннипех пулăшас тет, унăн çак ансат чăнлăхсене ăнланса илмелле кăна мар, тата вĕсене тăтăшах, кашни кунах пурнăçа кĕртсе пымалла.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар хăй 24 çул тултарнине ĕмĕрлĕхе чапа тухнипе кĕтсе илет. Отечественнăй аслă вăрçăра вăл хăйĕн çапăçури хастарлăхĕпе чăтăмлăхне, çирĕплĕхĕпе геройлăхне çеç мар, тăван совет çĕршывĕшĕн аста çапăçма пултарнине те кăтартса пачĕ.

Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапрĕ, халĕ те çавăн пекех çапать. Гитлер, мухтанмалли урăх нимĕн те тупайман пирки, çуркунне çĕнĕ наступлени пуçласа ярассипе хăратма пăхать. Вăл çуркуннеччен çĕнĕ вăйсем, çĕнĕ техника пухма шутлать, хĕçпăшалпа боеприпассем тăвас тĕлĕшпе ун̆ран никам та иртес çук текен шанчăкпа хăйне хăй йăпатать. Гитлерăн çав планĕсене те аркатса тăкас тесе, пĕтĕм вăя хурар.

Пирĕн çар Гитлерăн бандисене çапма вĕренсе çитрĕ, апла пулсан, пирĕн хĕçпăшалпа боеприпассем тăшманăнничен ытларах та пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăхрах пулччăр тесе, мĕн кирлине пурне те тăвăпăр.

Халĕ колхозниксем умĕнче пысăк та ответлă задача тăрать. Çаршăн çăкăрпа аш-какай та, пахча-çимĕçсем те, боеприпассем пекех, питĕ кирлĕ. Фабрикăна эпир хăйĕн мĕнпур вăй-хăвачĕпе ĕçлеме хушатпăр, фабрика начар ĕçленĕшĕн директора суда паратпăр; рабочи те, боец пекех, ыйтса ирĕк илмесĕр фабрикăран ĕçе пăрахса тухса кайма пултараймасть. Колхоз та—предприяти. Колхоз вăл—тырпул предприятийĕ, вăрçă вăхăтĕнче унта хурçă пек çирĕп дисциплина пулмалла. Начар ĕçлекен, çĕрте аран-аран çеç уса куракан колхоз государство умĕнче хăйĕн обязанноçĕсене пурнăçа кĕртсе пымасть, преступленилле ĕç тăвать, тăшмана пулăшать. Кун пек колхозсем пулмалла мар. Колхозниксемпе колхозницăсен, фронтри боецсем пекех, фабрикăсемпе заводсенчи рабочисем пекех, хăйсен мĕнпур обязанноçĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла. Фашизма çĕнтерессисаккăн пек тума ыйтать.

Фашистла бандитсем совет халăхĕ çине чура майăкăчне тăхăнтарма тăрăшаççĕ. Гитлеризмăн пуçне çапса çĕмĕрессисĕр пуçне, пирĕн урăх нимĕнле çул та çук; çак тĕллеве пурнăça кĕртес тесен, пирĕн хамăрăн мĕн пуррине йăлтах, хамăрăн пурнăçăмăра та пама хатĕр тăмалла, совет çыннисен ача-пăчасенчен пуçласа ваттисене çитичченех çак шухăша ăнланса илмелле.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă чаплă кун эпир унăн боецĕсене, командирĕсене, политработникĕсене, пирĕн çарăн çулпуçне Сталин юлташа çапла шантарса калатпăр: совет халăхĕ, тăшмана нимĕн хĕрхенӳсĕр çапса пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те туса парĕ, çакна тума хăйĕн пĕтĕм вăйне хурĕ.

Колхозниксен кучченеçĕ

Хĕрĕх çула çитнĕ вăтам пӳллĕ хĕрарăм лашине чарчĕ те çуна çинчен сиксе анчĕ.

— Парнесене кунта илеççĕ-и?—терĕ вăл.

— Кунта, кунта! Хăш колхозран эсир?—тесе кĕтсе илчĕ парнесем йышăннă çĕрте ĕçлекен çамрăк хĕр.

— «Трудовик» колхозран-ха эпĕ. Колхозниксем васкатсах ăсатрĕç. «Часрах вĕçтер, Алтатти инке, унсăрăн пирĕн кучченеçсем кая юлма пултараççĕ»,—терĕç. Кучченеçсем ытла чаплах мар пулĕ те-ха; акă, ку пыл, хамăр утарта тунăскер, ку кĕрпине те хамăрах суртарнă.

Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем, командирĕсем валли уяв ячĕпе парнесем февралĕн 14-мĕшĕнчех килме пуçларĕç.

Пилĕк кун хушшинче 48 колхозран тата районри учрежденисенчен 1600 килограмм сухари, пĕçерсе типĕтнĕ 200 килограмм аш-какай, 9 килограмм çу, 95 килограмм булка, 23 килограмм печени, 1500 пельмен, 68 килограмм тулă кĕрпи, 3 килограмм махорка, 7 литр эрех пухăнчĕ.

«Молния» колхоз колхозникĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсене уяв ячĕпе парне—135 килограмм сухари, 17 килограмм типĕтнĕ какай тата 20 чăх ярса параççĕ. Çак кучченеçсене колхозниксем вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартса çапăçакан Хĕрлĕ Çар воинĕсене пĕтĕм чĕререн кăмăлласа параççĕ, посылкăсем ăшне хунă çырусенче вĕсем хăйсен тăван ывăлĕсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума, нимĕç оккупанчĕсене пуçĕлех çапса çĕмĕрме сунаççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Çамрăксем машинăсен пайĕсене пухаççĕ

ÇЕРПУ. Сталинград облаçĕнчи комсомолецсенчен пример илсе, районри çамрăксем машинăсен пайĕсене, инструментсемпе металсем пухас ĕçе активлăн тытăнчĕç. МТС-ри комсомолецсем станци тавраш̆ĕнче йăваланса выртакан машина пайĕсене чылай пухрĕç. Вăл шутра коленчатăй валсем—тракторсен 200 валĕ, автомашинăсен 17 валĕ, 33 цилиндр, 21 гильза, трактор плугĕн 31 тимĕрĕ, 8 шатун, 38 шестерня, 103 штука тĕрлĕрен гайкăсем пухăннă.

Колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем 63 плуг тимĕрĕ, 117 плуг сурпанĕ пухнă.

Г. ПЕТРОВ.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Машинăсен пайĕсене, инструментсене пухас тĕлĕшпе районра ятарласа бригадăсем организациленĕ. Çав бригадăсем пурĕ тракторсене юсама кирлĕ пайсем—3 пин тенкĕлĕх, ытти ялхуçалăх машинисем валли—10 пин тенкĕлĕх пухнă. Ку ĕçре МТС-ри комсомолецсем хăйсен пысăк хастарлăхне кăтартаççĕ. Вĕсем пĕр кун хушшинче 7 хăвăртлăх коробкине, 3 радиаторăн варрине, радиаторăн 650 трубкине тупнă.

«Красный маяк» колхозри комсомолецсем тĕрлĕ машина пайĕсене 2.300 тенкĕлĕх пухнă. Николаева комсомолка пĕр пĕччен 100 тенкĕлĕх пухса панă.

• • •

Вăрнар районĕнче машина пайĕсене пухас тĕлĕшпе çамрăксен бригадисем ĕçлеççĕ. «Гигант», Ленин ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем 22 плуг тимĕрĕ, 4 сошник тата ытти тĕрлĕрен пайсем пухнă. МТС-ри çамрăксем ку енĕпе уйрăмах нумай ĕç тунă.

Ӳкерчĕк çинче (сулахайран): 1. Генерал-лейтенант Говоров юлташпа бригадăй комиссар Иванов юлташ штабра. 2. Е. А. Партоменко тата М. И. Дубровин юлташсене генерал-полковник А. И. Еременко боевой задани парать. 3. Кавалери Пĕрремĕш Гвардейски корпусĕн командирĕ генерал-майор П. А. Белов, батальонăй комиссар Ю. Д. Милославский командирăй пунктра.

Д. Чернов, Л. Доренский тата Л. Великжанин фотоӳкерчĕкĕсем (ТАСС фотохроники).

ПРОЛЕТАРИ ПОЛКОВОДЕЦЕСЕМ. Укерчĕк çинче (сулахайран): М. В. ФРУНЗЕ, В. И. ЧАПАЕВ, Н. А. ЩОРС, Г. И. КОТОВСКИЙ, А. Я. ПАРХОМЕНКО.

Ленин—Сталин ялавĕпе Хĕрлĕ Çар çĕнтерет

Е. Щаденко

СССР Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ, пĕррремĕш рангри армейски комиссар

Совет çĕршывĕ паян Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине палăртать. Пирĕн çар хăйĕн уявне фронтăн хаяр обстановкинче кĕтсе илет: нимĕçсен фашистла йышкĕтĕвĕсене — нимĕç захватчикĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çар туса пыракан вăрçă фрончĕ Мурманскран пуçласа Хура тинĕс патне çитиех сарăлса выртать. Совет государствин Хĕрлĕ Çарĕ, Хĕрлĕ Тинĕс-Çар Флочĕпе авиацийĕ пирĕн совет çĕршывĕ çине килсе кĕнĕ ылханлă тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапаççĕ, хăвалаççĕ ăна. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăх Хĕрлĕ Çарăн кашни утăмне сăнаса пырать, унăн кашни ăнăçлă ĕçĕшĕн хавасланать. Тылра мĕнпур вăйне хурса ĕçлесе çĕршыв оборонине пулăшма тăрăшакан миллионшар совет патриочĕсен чĕрисенче—пĕртен пĕр хĕрÿллĕ ĕмĕт çеç: тăшмана сывлăш çавăрма памасăр аркатса пыма мухтавлă хĕрлĕ воинсене пулăшмалла, оккупантсене хăвăртрах вĕлерсе пĕтермелле, тăван çĕршыва фашистла вăрă-хурахсенчен тасатмалла.

Хĕрлĕ Çар вăл—хĕçпăшалланнă совет халăхĕ, вăл—халăх çарĕ пулса тăрать. Пирĕн çулпуçсем Ленинпа Сталин çавăн пек тунă ăна, ирĕклĕхшĕн пынă çапăçусенче вăл хăйне çавăн пек кăтартса панă, вăл çавăн пеккине совет çыннисем çеç мар, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем те пĕлсе тăраççĕ, ăна юратаççĕ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул каярах çавтери йывăр обстановкăра çуралнă. Ун чухне Германин тискер империализмĕ хăйĕн войскисене Советсен çамрăк республики çине кĕртсе янă. Советсен çамрăк çĕршывĕн хуçалăхĕ, виçĕ çулхи вăрçа пула, питĕ юхăнчăк пулнă.

Ленин халăха çапла чĕннĕ: «Социализмлă тăван çĕршыв хăрушлăхра!» Çулпуç чĕнĕвĕ çине ответлесе, пинпин те пиншер рабочисемпе хресченсем Хĕрлĕ Çар ретне, Октябрьти социализмлă революцин аслă çĕнтерĕвĕсене хÿтĕлеме тухнă çар ретне тăнă.

Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене йĕркелес, ăна снаряжени парса тăрас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Çарăн вăрçă ĕçĕсене вĕсем хăйсем ертсе пынă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пынă кĕрешÿре Хĕрлĕ Çар хăйĕн малтанхи утăмĕсенчех ăнăçусем тунă. Тăшманăн Петроград патне—пролетариллĕ революцин вучахĕ патне пыма май килмен. 1918 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Германин çавтери вăйлăн хĕçпăшалланнă захватчикĕсене тытса чарнă. Граждан вăрçин пур çулĕсенче—Колчак Урал урлă каçнă чухне те, Деникин Орела йышăнса çĕршывăн чĕри патне— Мускав патне, Тула патнелле пынă чухне те, Юденич хăйĕн полкĕсене Петроград патнелле илсе пынă чухне те—Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çара ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕве хавхалантарса, ертсе пынă. Вĕсем Хĕрлĕ Çарăн боевой операцийĕсене ертсе пынă, çĕнĕрен çĕнĕ чаçсем йĕркелес ĕçе, фронта мĕн кирлине пурне те парса тăрас ĕçе, çарăн тылне çирĕплетес ĕçе, ăна контрреволюциллĕ вăйсенчен тасатас ĕçе ертсе пынă.

Çĕршер рабочисемпе хресченсем хăйсен ирĕкĕпе фронта кайнă. Кашни ĕççынни обязательнăй йĕркепе çар служби нче пулма тивĕçли çинчен пĕлтернĕ. Рабочисемпе хресченсен çарĕ туман миллионлă çар пулса тăнă; вăл хăй мĕншĕн кĕрешнине, мĕне хÿтĕленине пĕлекен çар пулса тăнă; тĕлĕнмеслĕ паттăрлăх кăтартса панă. Выçлăх, сивĕ, çавтери пысăк йывăрлăхсем пулнă пулин те, тыл нимĕн чарăнмасăр ĕçленĕ, фронта мĕн кирлине пурне те парса тăнă.

Анчах та çамрăк Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ пĕр çакăн çинче çеç пулман. Граждан вăрçи фрончĕсенче Хĕрлĕ Çар аслă çĕнтерÿсем тунине вăл Ленин—Сталин партийĕн ялавĕ айĕнче кĕрешнипе ăнлантарса памалла. «Хĕрлĕ Çар çакăн пирки çĕнтернĕ: тыла тата Хĕрлĕ Çарăн фронтне ертсе пыракан чăмăр большевиксен партийĕ пулнă, вăл партин хăйĕн пĕтĕçÿлĕхĕпе тата дисциплинипе вăйлă пулнă, хăйĕн революциллĕ шухăшĕпе тата пĕтĕмĕшлĕ ĕçе ăнăçлă тăвасшăн темĕнле жертвăсем те кÿме хатĕр тăнипе вăйлă пулнă, вăл миллионлă массăсене организацилеме никама та лайăх пултарнă, вĕсене йывăр обстановкăра тĕрĕс ертсе пынă». («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», 298 стр.).

Хĕрлĕ Çар совет çĕршывне рабочи класпа ĕçхресченĕсен тăшманĕсенчен тасатса пынă вырăнта пур çĕрте те—Украинăра, Белоруссире, Атăл тăрăхĕнчи çеçенхирсенче, Уралта, Вăтам Азин хăйăрлă пушхирĕсенче, Кавказ тăвĕсем çинчи хуласенче—пур çĕрте те ăна ĕçхалăхĕ ирĕке кăларакан çар вырăнне хурса, халăхшăн, совет влаçĕшĕн кĕрешекен, халăх интересĕсене тĕпренех сыхлакан политикăна пурнăçа кĕртессишĕн çапăçакан çар вырăнне хурса кĕтсе илнĕ.

Хăй пурнăçĕн малтанхи çулĕсенчех вăл, Ленинăн—Сталинăн пурне те çĕнтерекен ялавĕ айĕнче кĕрешекенскер, çавăн пек пулнă; вăл халĕ те, Германи фашизмне хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче те çавăн пекех. Çакă ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар вăй-хăвачĕн çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ленин калана сăмахсем яланах, хальхи пекех, янăраса тăраççĕ: «эпир вăрçă туса пыма пултаратпăр, мĕншĕн тесен пирĕн массăсем мĕншĕн вăрçнине пĕлеççĕ»,—тенĕ Ленин (т. XXIV, 62 стр.).

Халĕ те, граждан вăрçи çулĕсенчи пекех, пирĕн çарăн дисциплинине боецсем хăйсен ĕçĕ тĕрĕс пулнине ăнланса илни çирĕплетсе пырать, вĕсен паттăрлăхне çĕклентерет, пĕтĕм тĕнчене хавхалантарса хаваслантаракан массăллă геройлăха çуратать.

Хамăрăн тăван çĕршыва хÿтĕлес идея Хĕрлĕ Çарта геройсем çуратать, пирĕн воинсен паттăрлăхĕ умĕнче вăрçăсен историйĕ пĕлекен пур паттăрлăхсем те шупкан курăнаççĕ. Пирĕн боецсем хăйсем мĕншĕн кĕрешнине пĕлсе, хăйсен ĕçĕн тĕрĕслĕхне ĕненеççĕ. Пирĕн воинсен мĕне хÿтĕлемелли те, мĕнпе хÿтĕлемелли те пур.

Хĕрлĕ Çара аслă Ленинăн хăвачĕпе шухăш-кăмăлĕ хавхалантарса пырать, унăн ĕçĕсене аслă Сталинăн алли ертсе пырать.

Сталин юлташ ертсе, хавхалантарса пыракан большевиксен çарĕ иртнĕ çулсем хушшинче Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн вăй-хăватне ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетнĕ, халĕ те çирĕплетсе пырать.

Сталин юлташ совет çĕршывне индустриализацилес тĕлĕшпе, Хĕрлĕ Çара чи çĕнĕ йышши хĕçпăшал памалла тăвас тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнă.

К. Е. Ворошилов юлташ Сталин юлташ 60 çул тултарнă ятпа çырнă статьяра çапла каланă: «Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне техникăпа хĕçпăшаллантарни, çĕршывăн индустриализацийĕ пекех, Сталин ячĕпе çыхăнса тăрать. Сталин юлташ питĕ пысăк ĕçсем тунипе пула çеç çак задачăсене татса пама май килчĕ. Çĕршыва индустриализацилесси шĕн кĕрешме, çак индустриализаци никĕсĕ çинче мĕнпур халăх хуçалăхне çĕнĕрен хĕçпăшаллантарма, партие тата государствăри чи лайăх çынсене ертсе пымашкăн пĕр унăн çеç вăй çитнĕ».

Çĕршыва сталинла индустриализацилени паха çимĕçĕсене халĕ хаяр испытанисен çулĕнче, пирĕн халăх ĕлĕкхинчен те уçăмлăрах курса тăрать.

Сталинăн гениллĕ ăсне пула, унăн хастарлăхĕпе хăюлăхне пула, ĕçе çине тăрсах тума тăрăшнине пула, вăл малашнехине витĕр курма пултарнине пула, совет çĕршывĕн халĕ малта пыракан питĕ вăйлă промышленноçть пур. Çак промышленность халĕ фронта чи лайăх самолетсем, танксем, минометсем, пулеметсем, снарядсем, минăсем тата вăрă-хурахла оккупантсене аркатса, пĕтерсе тăкма кирлĕ ытти хĕçпăшалсем те парса тăрать.

Ленинпа Сталин çар кадрĕсене суйласа илесси çине, вĕсене воспитани парасси çине уйрăмах тимлĕн пăхма чĕннĕ. Халĕ Германи фашизмне хирĕç пыракан таткăлă çапăçусенче большевиксен партийĕ пăхса тăрăшса çитĕнтернĕ пирĕн çар вăйĕсен командăй, политикăллă тата технически составĕсем фронтра нимĕçсен çарне хирĕç, нумай тĕрлĕ хĕçпăшалпа, техникăпа çавтери вăйлăн хĕçпăшалланнă çарне хирĕç, стратеги тĕлĕшĕнчен хăюллă плансем кăларса тăратса, çарĕç искусствине ĕмĕрне пулман пусăма çити çĕклесе, питĕ хăюллă операцисем туса иртереççĕ. Çак çынсем ĕнтĕ—чăнкипех Сталин пăхса çитĕнтернĕ çынсем, вĕсем çине пĕтĕм çĕршыв пăхса савăнать.

Пирĕн çарăн тылĕ чăтăмлă та çирĕп. Совет çĕршывĕнчи халăхсем, пĕрлĕхлĕ çар лагерьне пĕрлешсе, фашистла вăрă-хурахсене хирĕç çапăçма хăйсен çарне вăйлăн пулăшса пыраççĕ. Пирĕн рабочисен, служащисен, интеллигенцин, колхозниксен ĕçри çĕкленĕвĕ çавтери пысăк. «Фронт ыйтать пулсан—туса паратпăр», теççĕ промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче ĕçлекен миллионшар çынсем. Тылра фронт валли тăвакан мĕнпур япаласене—вăрçăра кирлĕ пысăк машинăсенчен пуçласа боецсем валли çĕленĕ кĕрĕксемпе урана тăхăнмаллисем таранах — çынсем хăйсен тăван çарне юратса уншăн тăрăшса тăваççĕ.

Ленин—Сталин партийĕ пирĕн воинсен геройлăхне çĕнĕ пурнăç тăвакан халăхăн творчествăллă хавхаланăвĕпе пĕтĕçтерсе çирĕплетме пултарчĕ. Фронтпа тылăн çакă никам аркатайми пĕрлĕхĕ ĕнтĕ — пирĕн çĕнтерĕвĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Ленин—Сталин ялавĕпе эпир граждăн вăрçинче çĕнтертĕмĕр. Çав ялав айĕнчех эпир вăрă-хурахла гитлеризма хирĕç пыракан вăрçăра та çĕнтерÿ тăвăпăр. Нимĕç империализмĕн черносотенла бандисене çĕнтерсе аркатса тăкăпăр. Çакă вара малта пыракан мĕнпур этемлĕхшĕн хаваслăх кÿрĕ.

Тĕрĕслĕхшĕн пыракан çапăçура пире Ленинăн ĕçне малалла туса пыраканĕ, пирĕн гениллĕ çулпуç, аслă полководец Иосиф Виссарионович Сталин ертсе пырать, вăл пире çĕнтерÿ патне илсе çитерет.

Виçĕ ывăл

Амăрткайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Ÿстерсе ярать çĕршывăн
Ăшă аллине.

Чи асли танкпа çÿрет мĕн,
А вăталăххи —
Утпала, ăна тесессĕн —
Çук утран пахи.

Кĕçĕнни—тин пĕчĕкçеççĕ,
Тин ачаччĕ те! —
Кĕçĕнни ĕнтĕ вĕçевçĕ,
Пуринчен çÿлте.

Амăрткайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Ăсатать тăван çĕршывăн
Çапăçу хирне.

«Мĕн калам-ха?—терĕ ашшĕ
Аслă ывăлне. —
Ачаран машин-таврашшăн
Хыптараттăн эс.

Йывăçран эс самокатка
Туса пăхрăн ху.
Палласах тĕлпулнă акă
Халь сана танку.

Тыт ăна эппин тĕреклĕн!
Çĕмĕрттер унпа,
Салатсам çав хурахсенĕн
Ушкăнне чăл-пар!..

Улттăрах эс ут утлантăн,—
Тет вăл теприне,—
Йĕнере ытараймастăн,
Ахăр, хальччен.

Ыткăнах эппин хаяррăн
Эс тăшман çине;
Кас, тура та таптаттар ун
Калталла пуçне!

Ан тухайтăр тек вăл чĕррĕн
Çак хĕвел айне..»
Вара ашшĕ пехиллерĕ
Кĕçĕн ывăлне:

«Эс юмах пит юрататтăн
Çын вĕçни çинчен.
Ĕмĕтÿ ак çитрĕ санăн:
Ху паян вĕçен.

Пуринчен çÿле çĕклентĕр,
Хурчăку çав сан.
Çăхан ушкăнĕ чĕтретĕр
Эсĕ çывхарсан.

Пиччÿсем санпа мухтанччăр,
Çĕр çинчен пăртак
Кĕвĕçсе пăхса сăначчăр
Пур самолета.

«Пирĕн шăллăм мар-ши çавă?»
Теттĕр савăнса,
Тăшмана таранласан вăл
Çулăм хыптарса.

А аçу мухтантăр хаяр
Виççĕрпе те тан.
Хăшĕнчен хăйне ытарăп?—
Пурте хам юиран..»

Пехиллерĕ ашшĕ ăшшăн
Виçĕ ывăлне,
Амăш чикрĕ пĕрер шăшăл
Чăкăт çул çине;

Пĕр шăрттан касса валеçрĕ,
Чикрĕ йĕппе çип.
«Кучченеçĕм çакă, — терĕ,
Ушкелемĕç-и..

Салтака кайсăн, ĕлĕк,
Çавра чăкăтсăр
Кăлармастчĕç... халь тĕпшĕмлĕ
Пулни вырăнсăр.

Кирек мĕн пулсан та ĕнтĕ
Чăкăтпах пиллеп:
Ыра-сывă килччĕр, тетĕп,
Каялла киле..»

Амăрткайăк пек виç ывăл
Пĕр атте-анне
Ăсатать тăван çĕршывăн
Çĕнтерÿ çарне...

П. ХУЗАНГАЙ.

Праçник ячĕпе

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хирти Сĕнтĕр ялсоветĕнчи колхозсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа фронтри боецсем патне парнесем ярса параççĕ.

«Коммунар» колхоз—80 килограмм сухари, 2 мăшăр алса, 800 тенкĕлĕх тĕрлĕ кучченеçсем, «Победа» колхоз—52 килограмм сухари, 8 килограмм типĕтнĕ аш, 2,5 килограмм табак, 4 мăшăр носки, «Комбайн» колхоз—8 килограмм сухари, 8 килограмм типĕтнĕ аш, 550 тенкĕлĕх ытти япаласем, «Трактор» колхоз—24 килограмм сухари, 145 тенкĕлĕх ытти-апат-çимĕç хурса посылкăсем ячĕç.

Государство банкĕн районри отделенийĕнче ĕçлекенсем пĕр мăшăр ботинка, 5 алшăлли, супăнь тата махорка хурса посылка тунă, ăна февралĕн 17-мĕшĕнче фронтри боецсем патне янă.

В. ВИКТОРОВ.

Чăваш халăхĕн хăюллă ывăлĕ

Аслă Союзри миллионшар ĕççыннисемпе пĕрле мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретĕнче пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те фашистла оккупантсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Геройла Хĕрлĕ Çар ретĕнче миллионшар боецсем политикăллă аслă шкул витĕр тухрĕç, çапăçура паттăр та хăюллă çынсем пулса ÿсрĕç.

Элĕк районĕнче, Крымзарайка ялсоветне кĕрекен Петищево ялĕнче çуралса ÿснĕ Яков Игнатьевич Игнатьев юлташ Хĕрлĕ Çар ретĕнче хăйĕн пĕлĕвне кунран кун ÿстерсе пынă. 1937 çулта призыв комиссийĕ çĕршывăн çулăмлă патриотне—Игнатьев юлташа — Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ. Комсомолец Яков Игнатьев ун чухне призыв комиссине çакăн пек сăмах панă:

— Хĕрлĕ Çар воинĕн мухтавлă ятне яланах асра тытса, эпĕ тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, телейĕшĕн паттăррăн çапăçма пулатăп,—тенĕ.

Хĕрлĕ Çар ăна пур енлĕн вĕрентсе ÿстерсе пынă. Тăватă çул хушши Хĕрлĕ Çарăн политикăллă шкулĕнче хăйĕн пĕлĕвне, пултарулăхне ÿстерсе пырса, Яков Игнатьевич пограничнăй войскăсен иккĕмĕш рангри техник-интендантчĕн званине илнĕ, большевиксен партин ретне кĕнĕ.

Нимĕç фашисчĕсем, туслăх маскине витĕнсе, пирĕн телейлĕ, ирĕклĕ çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнчĕç. Игнатьев юлташ ертсе пыракан пограничниксен групипи вăрçăн малтанхи кунĕсенчех нимĕç вăрă-хурахĕсен хаяр атакисене сире-сире ярса вĕсене пысăк сухатусем кÿнĕ.

Пĕррехинче Командовани Игнатьев юлташăн групине боевой задани панă. Р. ялĕ патĕнчен противникăн тылне çĕмĕрсе кĕмелле; противник расчетне арпаштарса хамăрăн пехотăна тăшман çине тапăнма май туса памалла.

— Тăван çĕршывшăн! Аслă Сталиншăн! — тесе Игнатьев юлташ групипи çапăçăва кĕнĕ. Темиçе сехет хушши хаяр çапăçу пынă. Хăюллă пограничниксем тăшманăн атакисене сире-сире пăрахнă. Шиксĕр пограничниксем Командованин заданине чыслăн пурнăçланă. Вăл çапăçура командир Игнатьев хăй пĕччен нимĕçсен 35 салтакне, 5 автоматчикне тата 2 офицера пĕтерсе тăкнă.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çапăçура паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ хăйĕн 1941 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче кăларнă Указĕпе Яков Игнатьевич Игнатьев юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса наградăларĕ.

Правительствăн аслă наградине илнĕ хыççăн Н-ски чаçре пулса иртнĕ митингра Игнатьев юлташ сăмах каланă.

— Хаклă тăван çĕршыв умĕнче, боевой нарком Сталин юлташ умĕнче эпĕ тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма тупа тăватăп. Орден парса наградăлани çине эпĕ çапăçу хирĕнче Гитлерăн çĕршер бандичĕсене пĕтере-пĕтере тăкнипе ответлетĕп,—тенĕ.

Хăйĕн хăюллă ывăлне чăваш халăхĕ мухтать, çапăçура татах пысăк çĕнтерÿсем тума ырă сунать. Нимĕç оккупанчĕсене çĕршыв пичĕ çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех тасатма хушать.

М. ЯСТРАН.

Хĕрлĕ воинсем валли

КÿКЕÇ. Кивçурткассинчи пуçламăш шкулти пионерсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа боецсем патне парнесем ячĕç.

— Парнесем çеç мар, чысĕ хаклăрах,—теççĕ пионерсем.

Женя Иванова—табак енчĕкĕ, сăмса тутри, 10 конверт, 1 карандаш, Надя Затмилова—табак енчĕкĕ, 5 конверт, карандаш, Толя Илларионов—2 енчĕкĕ, 10 конверт, пĕр тетрадь пачĕç.

Шкулĕпе ачасем 18 табак енчĕкĕ, 4 сăмса тутри, 110 конверт, 5 карандаш, 1 çĕлĕк, 1 шарф, пĕр мăшăр ăшă тăла, 3 стакан махорка тата ытти япаласем ячĕç.

Н. ФЕДОРОВ.

С. К. ТИМОШЕНКО, С. М. БУДЕННЫЙ, К. Е. ВОРОШИЛОВ юлташсем (1920 çулта декабрь уйăхĕ).

Республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксем уяв тӗлне тунӑ ҫитӗнӳсем

Сталин ячӗпе тӑракан автозаводри комсомолецсем пӗтӗм Совет Союзӗнчи ҫамрӑксене Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ куна ӗҫри пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме чӗнсе ҫыру ҫырнӑччӗ. Вӗсен чӗнӗвне хавхаланусӑн кӗтсе илсе, пирӗн республикӑри ҫамрӑксем хӑйсем ҫине пысӑк обязательствӑсем илнӗччӗ. Халӗ комсомолӑн нумай организацийӗсем ҫав обязательствӑсене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине пӑхса тухса итогсем турӗҫ.

* * *

КАНАШ. Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ тӗле вагонсем юсакан заводри рабочисен, уйрӑмах ҫамрӑксен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ палӑрмаллах ӳсрӗ. Капни ҫамрӑк патриот илнӗ обязательствӑсене ытлашшипех пурнӑҫлама тӑрӑшрӗ. Комсомолка Ревина юлташ 13-мӗш номерлӗ цехра токарь пулса ӗҫлет. Вӑл нормӑна 200 процент тултарса пыма обязательство илнӗ пулнӑ. Халь вӑл нормӑна 230—250 процент тултарса пырать. Токарь специальноҫне вӑл вӑрҫӑ кунӗсенче вӗренсе алла илнӗ. Ревина юлташ, производствӑра лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнипе пӗрлех, общество ӗҫе те активлӑн хутшӑнать. Вӑл цехри комсомол бюровӗн членӗ.

Ҫакӑн пекех механически цехри токарь-комсомолец Н. Юраков юлташ та, 200 процент тултарса ӗҫлеме сӑмах панӑскер, куллен икшер норма ытла тултарса пырать.

Ҫамрӑк комсомолец Н. Елохин 250 процент вырӑнне яланах 300-шер процент тултарса ӗҫлет. В. Павлюк комсомолец ӗнер нормӑна 375 процент тултарнӑ.

Сосзара тӑман ҫамрӑксем комсомолецсенчен пример илеҫҫӗ, вӗсем пек ӗҫлеме тӑрӑшаҫҫӗ. 13-мӗш номерлӗ цехри ҫамрӑк слесарь Кисин юлташ сменӑри нормӑна 250-шер процент тултарать. Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ куна Чесов, Николаев, Чернухин юлташсем ертсе пыракан фронтовой бригадӑсем пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илнине палӑртмалла. Ку бригадӑсем кулленех задание планран иртгерсе тултарса пыраҫҫӗ. Чернухин юлташӑн бригади заводра чи малти вырӑна тухрӗ. Ҫавӑнпа комсомол организацийӗ ӑна куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав пачӗ.

Фронтовой бригадӑсен бригадирӗсем Чернухинпа Чесов юлташсем нумаях пулмасть ВКП(б) ретне илме ыйтса заявлени панӑччӗ. Партбюро хӑйӗн ларӑвӗнче вӗсене ВКП(б) членӗн кандидатне илчӗ.

Февраль уйӑхӗнче 27 ҫамрӑк комсомола илме ыйтса заявлени панӑ. Вӗсенчен 8 заявленийӗ юлашки кунсенче, Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ кун тӗлне панӑскерсем.

* * *

УЛАТӐР. Нумаях пулмасть 30 хӗрарӑм токарь, слесарь тата ытти специальноҫсене вӗренсе тухрӗҫ. Вӗсен хушшинче — 22 комсомолка. Халӗ тата 18 хӗрача токарь, слесарь, электросварщик пулма вӗренеҫҫӗ.

Хулари заводсемпе предприятисенче пурӗ 8 фронтовой бригада ӗҫлет. Паровозсем юсакан заводри 9-мӗш номерлӗ цехри фронтовой бригадӑн членӗсем пурте нормӑсене ытлашшипех тултараҫҫӗ. Ку бригадӑра 200 процентран кая тултарса ӗҫлекенни никам та ҫук. Леонтьев, Пугаев, Васюкин комсомолецсем тепӗр чухне нормӑна тултарса 400—550 процента та ҫитереҫҫӗ.

Депори комсомолецсем те фронтри пек тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Арматурщик Доронин юлташ кулленхи нормӑна 150 процент тултарма пулнӑччӗ. Халь вӑл сменӑра икшер норма тӑвать. Тимохин, Новиков юлташсем те 200—210 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

* * *

Комсомол пуҫарнипе вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа пурӗ 4 хутчен воскресниксем пулса иртрӗҫ. Капни воскресник совет ҫамрӑкӗсен хӗрӳллӗ патриотизмне, вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйне фашизма ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫе пама хатӗррине кӑтартрӗ. Воскресниксенче ҫамрӑксемпе пӗрле ватӑ рабочисем, служащисем, колхозниксем ӗҫлерӗҫ. Тӑватӑ воскресникре пирӗн республикӑра пурӗ 498.779 ҫын хутшӑннӑ. Вӗсем 748.910 тенкӗ укҫа тата 274.321 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Ӗҫлесе илнӗ укҫатенкӗпе ӗҫкунӗсем ҫине илнӗ тупӑша йӑлтах оборона фондне хывнӑ.

* * *

Февралӗн 21-мӗш тӗлне пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем оборона фондне 7.364 пин тенкӗ укҫа хывнӑ. Вӑл шутран 1.268.000 тенкӗ «Комсомол Чувашии» бронепоезда тунӑ ҫӗре кайнӑ. Оборона фондне укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе Шупашкар хули малта пырать. Хулари ӗҫҫыннисем пӗтӗмпе 1.466 пин тенкӗ пухнӑ, 111 пин тенкине бронепоезд тунӑ ҫӗре панӑ. Ҫавӑн пекех Улатӑр районӗ те каях юлмасть. Вӗсем оборона фондне 898 пин тенкӗ хывнӑ. Канаш районӗнчи ӗҫҫыннисем оборона фондне 840 пин тенкӗ панӑ, вӑл шута бронепоезд тума панӑ 79 пин тенкӗ те кӗрет.

* * *

Февралӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа мартӑн 1-мӗшчен йӗлтӗрҫӗсен кросӗ пырать. Малтанхи 20 кун хушшинче кроса республикӑри 62.080 ҫын хутшӑннӑ. Вӗсенчен 50.969 ҫын нормӑсем панӑ. Кроса хутшӑнакансем Шупашкар хулинче уйрӑмах йышлӑ. Кунта пӗтӗмпе 5.720 ҫын кросра пулнӑ. Елчӗк районӗ те каях юлмасть. Унта пурӗ 4.429 ҫын кроса хутшӑннӑ, 4.113 ҫын нормӑсем панӑ.

Шупашкарти 3-мӗш номерлӗ шкулта вӗреннӗ Пикулев юлташ Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ. Фронтра боевой заданисене лайӑх пурнӑҫа кӗртнӗшӗн 6 благодарность илнӗ. **Укерчӗк ҫинче:** 3-мӗш №-лӗ шкулти учительница **А. И. Васильева** юлташ шкулти вӗренекенсене Пикулев юлташран илнӗ ҫырӑва вулаҫа парать.

Ястржембский фотоӳкерчӗкӗ.

Шупашкар фронта пулӑшать

Сталин юлташ Октябрьти социализмлӑ аслӑ революци 24 ҫул тултарнӑ уяв кунӗсенче панӑ историллӗ кӑтартусене пурнӑҫласа, Шупашкар ӗҫҫыннисем хӑйсен ӗҫне фронт ыйтнӑ пек улӑштарса ҫӗнетрӗҫ, хӑйсен пӗтӗм вӑйне, пултарулӑхне фронта пулӑшас ӗҫе хураҫҫӗ.

Юлашки 4 уйӑх хушшинче хулари Осоавиахим организацин ретне 500 ытла ҫын кӗнӗ. Ҫак вӑхӑтра Осоавиахим организацийӗ ретӗнче 800 ҫын ворошиловла тӗл пеме вӗренчӗҫ, 143 ҫын пулеметран, 39 ҫын пистолетран тӗл пеме вӗренчӗҫ, 100 ҫын радистсен курсӗнчен вӗренсе тухрӗҫ.

Вӑрҫӑ обстановки РОКК организацийӗн ӗҫне тӗпренех улӑштарса ҫӗнетме хушрӗ. Тылра та, фронтра та кирлӗ медицина кадрӗсене васкавлӑн хатӗрлемелле. Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа хулара 155 медсестра, 165 санитари дружинницисем вӗрентсе хатӗрленӗ.

Шупашкар ӗҫҫыннийӗсем, Совет Союзӗнчи пӗтӗм халӑх пекех, хӑйсен чаплӑ Хӗрлӗ Ҫарӗшӗн куллен тӑрӑшаҫҫӗ, ӑна пур енлӗн пулӑшса тӑраҫҫӗ, фашистла тискер кайӑксене пуҫӗпех ҫапса ҫӗмӗрме мӗн кирлине парсах тӑраҫҫӗ. Ҫӗршыв оборонин хӑватлӑ фончӗ ӳссе пыни—пирӗн халӑхӑн советла патриотизм туйӑмӗ хӑпарса пынине кӑтартать. Республикӑри пӗтӗм ӗҫҫыннисемпе пӗрле, ҫак ӗҫе Шупашкар хулинчи халӑх та активлӑн туса пырать. Ҫӗршывӑн оборона фондне 1.355.400 тенкӗ укҫа, 84 грамм ылттӑн, 4.936 грамм кӗмӗл тата 1.089.000 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем хунӑ. Фабрикӑсемпе заводсенче тата учрежденисенче ӗҫлекен рабочисемпе служащисем кашни уйӑхрах хӑйсен 1—2 кунхи ӗҫ укҫине оборона фондне парса тӑраҫҫӗ.

Хула ӗҫҫыннийӗсем канмалли кунсенче воскресниксенче ӗҫлеҫҫӗ. Воскресниксенче ку таранччен пурӗ 85 пин ҫын ӗҫленӗ, 224.000 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ, вӑл укҫана йӑлтах ҫӗршыв оборонин фондне панӑ.

Хулари Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑра ӗҫлекенсем Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе пуҫарчӗҫ. Вӗсен пуҫарӑвне хулари пӗтӗм халӑх ырларӗ, тӑван боецсем валли ӑшӑ тумтирсем пухса хатӗрлес ӗҫе пысӑк ҫӗкленӳпе тума тытӑнчӗ. Паянхи куна отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне тӑлӑп тата кӗрӗксем—32, мамӑк тирлӗ жилетсем—192, алсасем—852 янӑ, 890 мӑшӑр ҫӑматӑ, ҫӑмран ҫыхнӑ 1243 мӑшӑр перчаткӑсемпе алшишсем, 905 мӑшӑр носки, 2.740 ҫӗлӗк, ватка пусса ҫӗленӗ 296 куртка, 309 шалавар, 115 кӗрӗк-пиншак, 1.237 шарф, 305 одеяло, 717 свитер пухса тата хатӗрлесе янӑ.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе хулари комсомолецсемпе ҫамрӑксем активлӑн хутшӑнчӗҫ. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума Финанс Халӑх Комиссариатӗнче ӗҫлекенсем 2.577 тенкӗ, Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнче ӗҫлекенсем 2.500 тенкӗ, Госбанк коллективӗ 3.436 тенкӗ пачӗҫ. РСФСР Промкооперацийӗ ячӗпе пулакан танксен соединенине тунӑ ҫӗре хула ӗҫҫыннийӗсем 35 пин тенкӗ ытла укҫа, 22.508 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем пачӗҫ.

Укҫа-тенкӗпе япала лотерейин билечӗсене хула халӑхӗ пысӑк ҫӗкленӳпе ҫырӑнса илчӗ. Лотерея билечӗсене сарнӑ укҫа йӑлтах ҫӗршыв оборонине ҫирӗплетнӗ ҫӗре кайнине хула ҫыннисем лайӑх пӗлеҫҫӗ, вӗсем билет хакне хӑвартрах тӳлесе татма тӑрӑшаҫҫӗ. Паянхи куна лотерея билечӗсене сарса 848 пин тенкӗ пухнӑ.

Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ юбилей ячӗпе хула халӑхӗ Хӗрлӗ Ҫар воинӗсем патне 265 посылка ячӗ.

Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен кросне хула ҫыннисем активлӑн хутшӑнчӗҫ. Февралӗн 20-мӗшӗ тӗлне кросра пурӗ 6.200 ҫын пулчӗ, вӗсенчен 5.702 ҫын дистанцине лайӑх чупса тухрӗҫ. Хулари спорт обществисем кросра паха тӗслӗхсем кӑтартрӗҫ. «Буревестник» обществинчен кросра 520 ҫын пулчӗ, вӗсенчен 465 ҫын дистанцине вӑхӑтра тухрӗ.

Хӗрлӗ Ҫар кунран кун пысӑк ҫӗнтерӳсем туса пырать. Нимӗҫ оккупанчӗсене татти-сыпписӗр ҫӗмӗрсе ҫӗршывран хӑвалать. Ҫак хӗрӳ вӑхӑтра Хӗрлӗ Ҫара вӑйлӑн пулӑшса тӑмалла. Хамӑр вырӑнсенче пӗтӗм вӑя хурса тата тимлӗн ӗҫлесе Хӗрлӗ Ҫара малалла та вӑйлӑн пулӑшса тӑрар, ӗҫре дисциплинӑна, йӗркелӗхе ҫирӗп тытар, сыхӑлӑхлӑ пулнипе ҫӗршывӑн тылне тӗреклетер!

Н. ЧУРБАНОВ.

ВКП(б) хула комитечӗн ҫарӗҫ отделӗн заведующийӗ.

Тыл—фронт валли

Пирӗн Чӑваш республикинчи ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотӗн боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем пухса парас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ, ӑна халӗ те пысӑк ҫӗкленӳпе туса пыраҫҫӗ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа республикӑри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар валли пурӗ 65.680 тир, 37.595 килограмм ҫӑм пухнӑ, ҫав тирсенчен 5.312 кӗрӗк-пиншак ҫӗленӗ, халӑхран 500 кӗрӗк-пиншак пухнӑ, 1.685 жилетка, 16.372 мӑшӑр ҫӑматӑ, алшишсемпе алсасем—27.626 мӑшӑр, чӑлхасем, носкисем, портянкӑсем—16.674 мӑшӑр, пир портянкӑсем—14.621 мӑшӑр, 2.222 ӑшӑ кӗпе, 15.106 мулаххай, ватка пусса ҫӗленӗ курткӑсем тата фуфайкӑсем—15.106, ваткӑллӑ шалаварсем тата пусма шалаварсем — 2.712, свитерсем—1.973, аялти кӗпе-йӗм—8.553 мӑшӑр, алшишсем—13.781, минтер пичӗсем — 4.265, простынясем — 1.874 пухнӑ.

* * *

Республикӑри колхозсем тӑван ҫӗршыв оборонин фондне 371 тонна тӗштырӑ, 452 центнер аш-какай, 650 гектолитр сӗт, 2.264 килограмм ҫӑм пачӗҫ. Кунсӑр пуҫне пирӗн колхозниксем хӑйсен хуҫалӑхӗсенче тӑван Хӗрлӗ Ҫар валли пиншер ӗнесем, сыснасем, сурӑхсем тата кайӑк-кӗшӗк пӑхса ҫитӗнтереҫҫӗ.

Мускавшӑн ҫапӑҫнине кӑтартакан фильм

Союзкинохроникӑн Центральнӑй студийӗ «Нимӗҫ войскисене Мускав патӗнче ҫапса аркатни» ятлӑ фильм кӑларчӗ. Ҫак фильма Шупашкарта тата республикӑн ытти кино-театрӗсенче те кӑтартма тытӑнаҫҫӗ.

«Нимӗҫ войскисене Мускав патӗнче ҫапса аркатни» фильм чӑнахах пулнисене ӳкерсе илнӗ документсем тӑрӑх тунӑ кинокартина пулса тӑрать. Вӑл Мускавшӑн пынӑ ҫапӑҫусенче Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫсен фашистла йыткӗтӗвӗсене аркатса тӑкнине кӑтартса парать.

1941 ҫулти октябрь—декабрь уйӑхӗсенче Мускавшӑн пулса иртнӗ хаяр ҫапӑҫусем ӗмӗр асӑнмалӑх историе кӗрсе юлаҫҫӗ. Вӑл ҫапӑҫусем мӗнтери вӑйлӑ пулнине Германи командованийӗ Мускав патне 80 дивизи пухса тӑратнинчен те аванах чухласа илме пулать. Ҫав ҫар вӑрҫӑн ҫӗнӗ техникипе хӗҫпӑшалланнтарнӑ, танксемпе, мотомеханизациллӗ чаҫсемпе вӑйлатнӑ ҫар пулнӑ. Гитлер приказӗ тӑрӑх, нимӗҫ ҫарӗсен Мускава мӗнле те пулсан хӗл ларичченех илмелле пулнӑ. Ҫакна пула вӗсем, пысӑк ҫухатусем тунине пӑхмасӑрах, Мускав ҫине тӑрӑннӑ. Октябрь вӗҫнелле вӗсен танковӑй чаҫӗсем Мускав патне пымалли вырӑнсене талпӑнса кӗнӗ: пӗрренче—Мускав ҫывӑхӗнчи Истра, Яхрома, Красная Поляна пункчӗсене йышӑннӑ, тепӗр енче—Сталиногорска илсе, малалла—Каширa, Коломна патнелле пыма тухнӑ. Ҫак вӑхӑтрах вӗсем Мускав ҫине пеме йывӑр артиллери орудийӗсене илсе пырса вырнаҫтарнӑ. Ҫапла вара Совет Союзӗн чаплӑ столици—Мускав виҫӗ енчен тӑшман хупӑрласа илнӗ хула пулса тӑнӑ. Мускавӑн ҫапӑҫнине кӑтартакан кинофильм ҫак тапхӑртан пуҫланса каять.

Яланах пин-пин сутӑпа ҫиҫсе тӑнӑ Мускав, трамвай вагонӗсем, троллейбуссем, машинӑсем тӗвӗнипе, урамсем тулли халӑх ҫӳренипе вӗресе тӑнӑ Мускав — октябрь кунӗсенче салхуланать, хаярланать, чышкисене чӑмӑртать. Аслӑ ҫарпуҫ Сталин юлташ ертсе пынипе вӑл хӑй ҫине тӑрӑнакан фашистсен кӗтӗвӗсене татӑклӑ ҫапӑҫу пама хатӗрленет. Сталин юлташ «тӑшмана ҫапса ҫӗмӗрессине Мускав патӗнчен пуҫласа ямалла» тенӗ. Ҫак сӑмахпа хавхаланнӑ Мускав ҫыннисем Мускав хулипе унӑн ҫывӑхне тӑшман пырса кӗмелле мар крепость тума хатӗрленеҫҫӗ. Хула ҫумӗсенче баррикадӑсем, блиндажсем тӑваҫҫӗ, окопсем чаваҫҫӗ, танксене чарса лартмалли валсем купалаҫҫӗ. Хапхасем умне, урам тӑваткӑлӗсене, вышкӑсем ҫине дозорсем тӑратаҫҫӗ. Мускав тӑшман куҫӗнчен пытанмалли тӗспе витӗнет. Анчах та хӑрушлӑх ҫинчен систерекен сирена сассисем хушшинчех, ҫӳлтен пӑрахакан бомбӑсем ӳке-ӳке сурӑлнӑ вӑхӑтрах фронт валли хӗҫпӑшал хатӗрлекен заводсем пӗр тикӗссӗн ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех экран ҫинче рабочисен батальонӗсем ушкӑнланни, вӗсем хӗҫпӑшал тытса пӗрин хыҫҫӑн тепри фронта тухса кайни тата ытти те курӑнаҫҫӗ.

Кинофильмӑн чӑннипех те пулса иртнӗ эпизочӗсене пӑхса ... кан ҫын, вӑл сав хӗрӳллӗ хаяр кунсенче Мускавра пулман пулин те, унти пурнӑҫа хӑй курса ирттернӗ пекех туйса ӑнланать.

Мускав умне тӳрех ҫавтери пысӑк хӑрушлӑх ҫитсе тӑнӑ. Ноябрь кунӗсем. Тӑшман ҫарӗсем ҫывӑхарах та ҫывӑхарах пырса кӗреҫҫӗ. Пӗтӗм Совет ҫӗршывӗ те хӑйӗн столицине хӳтӗлеме полк хыҫҫӑн полк ярса тӑрать. Кӗрешӳ вӑйланать. Ҫынсен сӑн-питӗнче ҫилӗлӗх, хаярлӑх капланса ҫитни палӑрать. Ҫак вӑхӑтра, ноябрӗн 6-мӗшӗнче, Октябрь уявӗ ячӗпе тунӑ чаплӑ ларура доклад тӑвакан тата тепӗр кунне Хӗрлӗ Площадьри Ленин мавзолейӗ ҫинчен сӑмах калакан Сталин курӑнса каять. Экран ҫинчен унӑн лӑпкӑн та паттӑррӑн тухакан сасси илтӗнет. Вӑл, аслӑ ҫулпуҫ, Хӗрлӗ Площадьри парадра тӑракан ҫар чаҫӗсем ҫине пӑхса, пурне те ҫапӑҫура ҫирӗппӗн тӑма чӗнет.

Сталин юлташ сӑмахӗ совет халӑхне чӗрӗ вӑй парать. Вӑл хӑй парӑнас ҫуккине, Мускав патӗнче тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкассине ӗненет. Йывӑр кунсем, хӑрушӑ вӑхӑт. Анчах ҫавах та халӑха ҫӗнӗ вӑй пырса кӗни сисӗнет. Мускав таврашӗнчи укреплениисем ӳсеҫҫӗ, хӗҫпӑшаллӑ вӑй йышланать. Ҫак вӑхӑтра фронтри Ҫар Советӗнче Гитлерӑн войскисене ҫапса аркатмалли хӑюллӑ плана тӗплӗн туса ҫирӗплетеҫҫӗ.

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн хурҫӑ пек ҫирӗп кадрсем ӳссе пыраҫҫӗ. Ҫак хӑюллӑ ҫар чаҫӗсем тӑшманӑн наступленине чарса лартса, пуринчен малтан контрнаступлени пуҫласа ямалла.

1941 ҫулти декабрӗн 6-мӗш кунӗ. Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем, тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине хавшатса ҫитерни хыҫҫӑн, контрнаступлени пуҫласа яраҫҫӗ.

Тупӑсем, гаубицӑсем, минометсем, хаяр кӗпҫисене тӑшман ҫарӗ еннелле кӑнтарса тӑрса, пӗтӗм фронт тӑршшӗпех харӑссӑн пеме тытӑнаҫҫӗ. Тӑшманӑн укреплениийӗсем, заграждениийӗсем сывлӑшалла сирпӗнсе каяҫҫӗ. Ҫак самантрах тӳперен тӑшман ҫине Сталин соколӗсем тапӑнаҫҫӗ. Вӗсем фашистла йыткӗтӗвӗсем ҫине пиншер бомба тӑкаҫҫӗ, тупӑсенчен, пулеметсенчен пераҫҫӗ. Нимӗҫсен танкӗсем ҫунаҫҫӗ. Артиллерипе авиаци персе ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн тӑшман ҫине танксем атакӑна тухаҫҫӗ. Вӗсем питӗ те нумаййӑн. Тӑшманӑн юлашки укреплениийӗсене ишеҫҫӗ, пехотӑпа кавалери валли ҫул уҫса параҫҫӗ.

Танксем уҫса панӑ ҫулсемпе совет пехотинецӗсем ыткӑнаҫҫӗ. Йӗлтӗрпе пыракан чаҫсем, сӑртсем ҫинчен вӗҫнӗ пек ярӑнса анса, тӑшманӑн тарма пуҫланӑ войскисене хӑвалаҫҫӗ. Пӗтӗм фрончӗпех:—Тӑван ҫӗршывшӑн! Сталиншӑн! Урра!—тесе кӑшкӑрни янӑрать.

«Мускав патӗнче нимӗҫ войскисене ҫапса аркатни» фильм—Хӗрлӗ Ҫар пӗр Мускав патӗнче тунӑ ҫӗнтерӗве кӑна мар, вӑл пирӗн пӗтӗм совет халӑхӗ хӑйӗн ҫӗршывӗшӗн геройла кӗрешнине те аван кӑтартса парать. Ку фильм—ӗненмелле, ӑнланмалла тата тӗплӗ ӑсталӑхпа лайӑххӑн йӗркелесе тунӑ картина. Халӑха вӑл фашизм тискерлӗхӗ ҫинчен тата хамӑр Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑвачӗ ҫинчен нумай ӑнланма май парать.

С. ЭЛЬГЕР.

Ютҫӗршыв деятелӗсем Хӗрлӗ Ҫара вӑл 24 ҫул тултарнӑ ятпа янӑ саламсем

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 21-мӗш. (ТАСС). Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ кун ҫывхарса килнӗ май, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи паллӑ деятельсенчен нумайӑшӗсем саламсем янӑ. Эпир кунта ҫав саламсене илсе пичетлетпӗр:

АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШУЛЛӖ ШТАТСЕН ҪАР МИНИСТРӖ СТИМСОН

Совет Союзӗн мухтавлӑ ҫарне, ӑна организациленӗренпе 24 ҫул тултарнӑ ятпа, хамӑн хӗрӳллӗ салама калаҫса пама май килнӗшӗн Сире тав тӑватӑп. Принципсӑр агрессорсем тискеррӗн тапӑнни хирӗҫ пыракан кӗрешӳ вӑхӑтӗнче вырӑс ҫарӗ хӑйӗн ӑсталӑхне, паттӑрлӑхне тата кӗрешме хатӗррине кӑтартса пачӗ. Хӑйсен тӑван ҫӗршывне хӳтӗлес тӗлӗшпе вырӑссем паттӑррӑн кӗрешни ирӗклӗхшӗн пыракан ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ ытти пур салтаксене те хавхалантарса пырать.

АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШУЛЛӖ ШТАТСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛЬСЕН ПАЛАТИН ҪАР ӖҪӖСЕМ ТӖЛӖШПЕ ӖҪЛЕКЕН КОМИССИН ПРЕДСЕДАТЕЛӖ МЭЙ

Сирӗн аслӑ ҫар организацине тунӑранпа 24 ҫул тултарнӑ ятпа сире ҫывлӑх сунса салам яратӑп. Совет Союзӗпе унӑн халӑхӗсене гитлерла йыткӗтӗвӗсем вӑрӑ-хурахла ултавлӑн тапӑннинчен ҫавтери паттӑррӑн та чаплӑн хӳтӗленнишӗн Хӗрлӗ Ҫара тӗнчери ирӗклӗхе юратакан пур халӑхсем те тав тума тивӗҫлӗ. Эпӗ сире ӗнентерсех ҫапла калатӑп: хальхи вӑхӑтра эсир ҫавтери паттӑррӑн ҫапӑҫса хӳтӗлекен аслӑ ирӗклӗх ӗҫӗ татӑклӑнах ҫӗнтересси ҫине американецсем нимӗн иккӗленмесӗр шанса тӑраҫҫӗ. Ҫирӗп тытӑнса тӑрӑр. Америка сире войскӑсемпе те, хӗҫпӑшалпа та пулӑшу парса пырӗ.

АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШУЛЛӖ ШТАТСЕН ГЛАВНАЙ ТИНӖС НАЧАЛЬНИКӖ ПУЛНӐ АДМИРАЛ ВИЛЬЯМ ПРАТТ

Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнче, Российӑна хирӗҫ Гитлер хӑйӗн ҫарӗсем пек хӑвӑрт вӑрҫине пуҫласа янӑ хыҫҫӑн пулнӑ событисене пӗтӗмӗшпех пӑхса тухсан, темиҫе тапхӑр палӑртма пулать. Чи малтанах, ку вӑл—вырӑссем хӑйсен войскисем чакассине питӗ пысӑк ӑсталӑхпа туса ирттерни. Вӗсем хӑйсен территорин кашни дюймӗшӗн гитлеровецсене хаклӑ тӳлеттерчӗҫ, анчах ҫапах та хӑйсен ҫарӗн тӗп вӑйӗсене ытлашши пысӑк ҫухатусем тумасӑрах илсе тухрӗҫ. Гитлеровецсен хӑйсен коммуникаци линийӗсене тытса тӑма йывӑрланса ҫитсен, вӗсем малалла питӗ вӑрах куҫса пыма тытӑнсан, вырӑссем контрнаступлени пуҫласа ячӗҫ, ҫак контрнаступлени ку таранччен тӗлӗнмелле пысӑк ӑнӑҫусемпе пулса пырать. Малашнехи историксем вырӑссен верховнӑй командованине, унӑн стратегиллӗ планӗсемшӗн, Германи верховнӑй командованийӗнчен пысӑкрах хак парӗҫ. Вырӑс халӑхӗ, унӑн ҫапӑҫури арҫынӗсемпе хӗрарӑмӗсем хӑйсен пӗрлехлӗ тӗллевӗпе вӑй-хӑвачӗшӗн чи пысӑк мухтава тивӗҫлӗ. Ҫавнашкалах тата вырӑссен тинӗс-ҫар вӑйӗсем ҫинчен те пирӗн манма кирлӗ мар. Балтикӑпа Хура тинӗссен тӑварлӑхӗ пирки тухса тӑракан чӑрмавсене пӑхмасӑрах, сывлӑшран тапӑнассин тата минӑсем лартнӑ вырӑнсен хӑрушлӑхне пӑхмасӑрах, ССР Союзӗн тинӗс-ҫар вӑйӗсем тунӑ результатсем противника вӗсем пысӑк сиен кӳнине, хӑйсем пысӑках тӑкаксем тӳсменнине кӑтартса параҫҫӗ. Вырӑссем тунӑ ӑнӑҫусем умӗнче пӗр ҫар ҫынни те пуҫ таймасӑр тӑма, «кӑна лайӑх тунӑ», тесе каламасӑр иртсе кайма пултараймасть.

АНГЛИН АМЕРИКӐРИ ПӖРЛЕШУЛЛӖ ШТАТСЕНЧИ ҪАР МИССИН ПУҪЛАХӖ ФЕЛЬДМАРШАЛ ДЖОН ДИЛЛ

Сирӗн ҫара тунӑранпа 24 ҫул тултарнӑ ятпа Англин Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсенчи ҫар представителӗсен ячӗпе эпӗ хӗрӳллӗн сывлӑх сунатӑп. Эсир ҫӗнӗрен кӑтартса паракан ҫапӑҫури паттӑрлӑхсем пире чӗререн хавхалантараҫҫӗ, сире эпир ӑнӑҫусем тума ырӑ сунатпӑр.

«НЬЮ-ЙОРК ГЕРАЛЬД ТРИБЮН» ХАҪАТӐН ВӐРҪӐ ӖҪӖСЕМ ҪИНЧЕН ҪЫРАКАН ОБОЗРЕВАТЕЛӖ МАЙОР ЭЛИОТ

Хӗрлӗ Ҫар хӑй 24 ҫул тултарнӑ кун уйрӑмах акӑ мӗнпе мухтанма пултарать: тӗнчери халӑха икӗ ҫул хушши пусмӑрласа, хӑратса усранӑ нимӗҫсене ҫӗнтерекенни никам та ҫук текен юмаха Хӗрлӗ Ҫар аркатса тӑкрӗ. Ирӗклӗхпе цивилизацишӗн Хӗрлӗ Ҫар питӗ пысӑк ӗҫ тӑвать. Руководство, тактика, техника тӗлӗшпе, ҫавнашкалах снабженипе обслуживани тӗлӗшпе те Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн пахалӑхӗсене ҫарсен пахалӑхне сӑнаса пӑхмалли пӗртен пӗр уйхирте—ҫапӑҫу уйхирӗнче кӑтартса пачӗ.

АМЕРИКӐРИ ҪАР ЖУРНАЛӖ «АРМИ ЭНД НЕВИ ДЖОРНЭЛ».

Майлӑ самантпа усӑ курса, СССР Оборона Халӑх Комиссарне Сталина Хӗрлӗ Ҫарӑн мухтавлӑ уявӗ ячӗпе сывлӑх сунса саламлатпӑр. Хӗрлӗ Ҫарӑн командирӗсемпе боецӗсем кӑтартса панӑ чӑтӑмлӑх, хаяррӑн хирӗҫ тӑни тата питӗ активлӑн кӗрешни историе совет правительствипе совет ҫӗршывӗ тунӑ геройлӑхпа паттӑрлӑхӑн чи паллӑ примерӗсем пулса кӗрсе юлаҫҫӗ.

Ӑшӑ япаласем паманшӑн асаплантарса вӗлернӗ

СТОКГОЛЬМ, февралӗн 19-мӗш. (ТАСС). «Фелькишер беобахтер» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Ростокра (Чехословакия) Германин уйрӑм сучӗ 44 ҫулхи Альфред Фишера Германи ҫарӗн нуммсем валли ӑшӑ япаласем паманшӑн вӗлермелле туса приговор йышӑннӑ.

Парижре французсене асаплантарса вӗлерни

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 19-мӗш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Виширен пӗлтернӗ тӑрӑх, нимӗҫсен оккупациллӗ влаҫӗсем Парижре Эжен Люмо француза асаплантарса вӗлернӗ. Ӑна «противника пулӑшакан ӗҫсем тунӑ» тесе айӑпланӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашская контора «Главкинопрокат» получила и выпускает на экраны республики новый звуковой документальный фильм

П... и монтаж фильма режиссеров: орденоносца Л. ВАРЛАМОВА, лауреата Сталинской премии И. КОПАЛИНА.

Снимали операторы: И. БЕЛЯКОВ, Т. БОБРОВ, Т. БУНИМОВИЧ, П. КАСАТКИН, Р. КАРМЕН, А. КРЫЛОВ, Л. ЛЕБЕДЕВ, Б. НЕБЫЛИЦКИЙ, Б. МАКАСЕЕВ, М. ШНЕЙДЕРОВ, В. ШТАТЛАНД, А. ЩЕКУТЬЕВ, А. ЭЛЬБЕРТ, В. СОЛОВЬЕВ, С. ШЕР.

Производство Центральной студии КИНОХРОНИКИ.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ

требуются

на постоянную работу: опытный тракторист, механик по двигателю внутреннего сгорания, бондари, возчики, кочегары, чернорабочие, работницы.

Оплата сдельная.

С предложениями обращаться: Чебоксарский ликеро-водочный завод, ул. Чувашская, № 65, к главному инженеру.

5—2

Строительству требуются для работы в Чебоксарах:

секретарь-машинистка, плотники, столяры, маляры, штукатуры, каменщики, бетонщики, печники, арматурщики, кровельщики, землекопы, кузнецы, шофера, подсобные рабочие, сторожа, курьеры.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица К. Маркса, дом № 80, контрольная будка, с 2 час. дня до 7 час вечера.

3—3 Администрация.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. ...одарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ йӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 388 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: л: